Çуран çӳрекенсен пурнăçĕ çул çинче нумай чухне хăйсен айăпĕпе татăлать ● 5 стр.

ХЫПАР

1997 çулхи январĕн 30-мĕшĕнче тухма пуçланă

*Анне, аппа та йăмăк, мăшăр... Эсир пуртан кил-çуртăм ăшă*

# ЧĂВАШ ХĔРАРĂМĔ

8(981 ) №, 2017, пуш/март, 4

Хакĕ ирĕклĕ. 16+

Хаçата электронлă адреспа та çыру çырма пултаратăр: zuwxeraram@mail.ru.


●Вĕсем вăрçă пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччченех çапăçусене хутшăннă 2 стр.

●Паян та... пыйтăпа кĕрешетпĕр 3 стр.

●Кăркка аçи те чĕпĕ пусса кăларать 8 стр.

●Чуптăвассинчен хăраса хĕр... сухан çинĕ 9 стр.

●Шурă-хура юрату 11 стр.


*ПЕРЕКЕТ УРОКĔ*

*«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМНЕ» Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен йӳнĕ хакпа – 316, 74 тенкĕ – кашни сыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ. Каярахпа хаксем ӳсеççĕ.*

РЕДАКЦИ ПОЧТИНЧЕН

## Тав тăватăп

Сывлăх сунатăп, хаклă редакци! Пурнăçра йывăрлăхсем сиксе тухнипе сирĕнтен пулăшу ыйтма тивнĕччĕ. Çемьери ăнланманлăха пула хамăн пенси укçине алла илейменнипе редакцие çыру çырнăччĕ. Ытла та кулянтăм пулас, сывлăх хавшанипе чĕрепе аптрарăм...

Тавах сире, яла килсе манпа тĕл пулма та вăхăт тупрăр, çырăва та пичетлерĕр. Лару-тăру уçăмланчĕ, ыйту татăлчĕ – халĕ хамăн пенсие хамах илсе тăратăп. Сывлăхăма сиплеме вара Канашри больницăра пулăшрĕç – васкавлă пулăшу машинипе юн тымарĕсен чирĕсен центрне вăхăтра илсе çитерсе çăлса хăварчĕç. Тепĕр хут пурне те – журналистсене те, сывлăх хуралĕн ĕçченĕсене те – тав тăватăп.

**Галина АНДРЕЕВА.**
Канаш районĕ.

Çанталăк

| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 04.03 | + 1 | – 3 |
| 05.03 | – 3 | – 4 |
| 06.03 | – 2 | – 2 |
| 07.03 | 0 | – 2 |
| 08.03 | – 3 | – 7 |
| 09.03 | – 6 | – 9 |
| 10.03 | – 6 | – 7 |

# Шурă чăрăш вăрманĕнчи,



# çӳп-çап купи çывăхĕнчи ял,

Автор тата cap.ru сайтĕнчи сăнӳкерчĕксем.

## е чăх-чĕпе тортпа тăрантарни çинчен

4 стр.

**Кăçал республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев халăх сĕнĕвне шута илсе общество инфратытăмне аталантаракан проектсене пурнăçа кĕртесси çинчен Указ алă пусрĕ. Кунта шывпа, электричествăпа тивĕçтерекен объектсене çĕнĕрен хăпартас е юсас, çӳп-çапа пуçтарса тирпейлес ĕç пирки сăмах пырать. Çакăн валли республика бюджетĕнчен 75 миллион тенкĕ уйăрма палăртнă.**

**Экологи çулталăкĕнче Пĕтĕм Раççейри "Таса çĕршыв" проектпа килĕшӳллĕн Питтукасси свалки вырăнне йĕркене кĕртесшĕн. Шăпах çакăнта Шупашкарти чи илемлĕ вырăнсенчен пĕри пулĕ. Ăна рекультивацилеме федераци бюджетĕнчен 380 ытла миллион тенкĕ куçарĕç. Унсăр пуçне республика, тĕп хула бюджечĕсем укçа уйăрĕç. Кăçалах 122 миллион тенкĕпе усă курма планланă.**






АСТĂВĂМ

# Çапăçура – паттăрлăхпа, ĕçре хастарлăхпа палăрнă

**Шупашкарти Çар мухтавĕн музейĕнче «Элĕк районĕн мухтавлă салтакĕсем» курав уçăлчĕ.**

Çамрăксене çарпа патриот воспитанийĕ парас тĕллевпе Шупашкарти Çар мухтавĕн музейĕнче 2017 çулхи нарăс уйăхĕнче Паттăрлăх уйăхлăхĕ иртрĕ. Çак тапхăрта музей ĕçченĕсемпе пĕрле Чăваш наци конгресĕн культура комитечĕн хастарĕсем шкул ачисемпе тĕлпулусем йĕркелерĕç, уроксем иртерчĕç. Уйăхлăх вăхăтĕнче кунта «Элĕк районĕн мухтавлă салтакĕсем» курав уçăлчĕ. Экспозици Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи пуçламăшĕнчен вĕçне çити çапăçса киле таврăннă икĕ çын шăпипе паллаштарать. Куравра фронтовиксен вăрçă вăхăтĕнчи тата хальхи пурнăçĕ сăнланнă. Кунтах вăрçăри тата мирлĕ пурнăçри мăшăрĕсемпе, ачисемпе çапăннă сăнÿкерчĕксем, салтак çырăвĕсем, документсем, нимĕç карттисем тата ытти те.

Элĕк ентешлĕхĕн хастарĕсенчен пĕри – Геннадий Егоров полковник – хăйĕн ашшĕ пирки ăшшăн аса илчĕ. Аристарх Егоров Элĕк районĕнчи Янкурасра çуралса ÿснĕ. Сĕнтĕрвăрринчи вăрман техникумĕнче вĕреннĕ. Каярахпа кĕçĕн политруксен, унтан командирсен тата штабсен пуçлăхĕсен аслă офицерсен курсĕсенче ăс пухнă. Хĕрлĕ Çарта хĕсметре тăнă, финсемпе çапăçнă çĕре хутшăннă. Батарея политрукĕ пулнă май Ленинград çывăхĕнчи тата Байкал леш енчи-Амур фронтĕнче яппунсемпе паттăррăн çапăçнă, Корейăра дивизи штабĕн пуçлăхĕ пулнă.

Чăваш наци конгресĕн хастарĕ Вера Архипова пухăннисене ашшĕн пурнăçĕнчи чи кăткăс самантсем çинчен каласа кăтартрĕ. Элĕк районĕнчи Тури Вылара çуралса ÿснĕ Севастиан Архипов Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче пĕтĕм халăхпа пĕрле паттăррăн çапăçнă. Вăл Харьков, Луцк, Лубка, Белгород хулисене хÿтĕленĕ, Хĕвеллтухăç Европăра тăшмана аркатнă çĕре хутшăннă, Курск пĕккинче тăшманпа кĕрешнĕ. Вăрçă çулĕсенче ăçта кăна илсе çитермен пулĕ ăна шăпа. Польшăн Рашкоф /1944/, Скальмежиценово /1945/ хулисенче çар комендантĕ пулнă. Виçĕ хутчен аманнă. Паттăрлăхпа хăюлăхшăн I тата II степень Тăван çĕршыв вăрçин орденне, Хĕрлĕ Çăлтăр, Жуков орденĕсене тивĕçнĕ. «1941-1945 çулсенче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçинче Германие çĕнтернĕшĕн» тата ытти 13 медаль те унăн кăкăрĕ çинче çуталнă. Вăрçă хыççăн Севастиан Михайлович 50 çул ытла вĕрентÿ тытăмĕнче ĕçленĕ. Çĕмĕрле районĕнчи Юманай шкулĕн ĕçне йĕркелесе ярас енĕпе сахал мар тăрăшнă. Çак шкул паян та республикăра – вĕренÿ чи лайăх учрежденийĕсенчен пĕри.

Шкул ачисемшĕн, вĕрентекенсемшĕн Астăвăм касĕ питĕ интереслĕ пулчĕ. Мероприятие Çар мухтавĕн музейĕн ертÿçи Тамара Федулова, офицерсен пĕрлешĕвĕн пайташĕ, Тури Выла çынни Анатолий Павлов, писатель, Чăваш журналисчĕсен союзĕн Çемен Элкер ячĕллĕ премийĕн лауреачĕ Петр Сидоров хутшăнчĕç. Çар Мухтавĕн музейĕн ĕçченĕ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Светлана Асамат ачасемпе пĕрле çар юррисене шăрантарчĕ. Çакнашкал мероприятисем çамрăк ăрăва патриотизм тата кăмăл-сипет воспитанийĕ парас, Тăван çĕршывăн чăн-чăн хÿтĕлевçисен йышне кĕрес ĕмĕтне вăйлатма пулăшаççĕ.

**Вера АРХИПОВА,**
**ЧНК культура комитечĕн председателĕ.**

ЧНК архивĕнчи сăнÿкерчĕксем.

КУН-ÇУЛ

# «Малашлăха вăрçă татрĕ»

**Тăван халăхăмăр хаяр та ирсĕр вăрçăра çĕнтернĕренпе 72 çул çитнине паллă тума хатĕрленет. 1418 куна пынă çак юнлă тытăçу Красноармейскинче пурăнакан, кăçалхи çĕртме уйăхĕнче 94 çул тултаракан Зинаида Павлова чунĕнче те тарăн йĕр хăварнă.**

– Именкасси тăрăхĕнче йышлă çемьере çуралса ÿснĕ эпĕ, – пуçларĕ калаçăва ватă. – Атте – Иван Фомин. Анне Крентейкассинчен пулнă, ятла ăна Мария Григорьевна ятпа аван пĕлнĕ. Вĕсем 1920 çулта çемье çавăрнă. Пилĕк хĕрпе тăватă ывăл çуратса ÿстернĕ.

Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи Фоминсен çемйинчен те пăрăнса иртмен. 1941 çулхи юпа уйăхĕнче Иван Фомина, 40-ри вăйпитти арçынна, вăрçа кайма повестка параççĕ. Килте мăшăрĕпе çичĕ ачи тăрса юлаççĕ. Ун чухне Валентин икĕ çулта çеç пулнă-ха.

Кÿкеç çывăхĕнче икĕ уйăх вĕрентеççĕ салтаксене, ун хыççăн çул фронта выртать. Мускава хÿтĕлеме тивет ентешĕн. Лашапа снарядсем турттарнă вăл.

1943 çулта рядовой сылтăм аллинчен йывăр аманать. Госпитальте сипленнĕ хыççăн тăван ене таврăнать. Пĕр хушă почтальонра, "Путь Ленина" хуçалăхăн кладовщикĕнче тăрăшать. 1950 çулта тăван хуçалăхра сад ĕрчетет. Çавăн хыççăн хăйĕн килĕнче те чылай улмуççи лартать. 1976 çулта çĕре кĕрет. Мăшăрĕ 84 çула çитиччен пурăнать.

– 1923 çулхи çĕртмен 29-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ эпĕ, – тет калаçăва малалла тăсса Зинаида Ивановна. – Çемьере чи асли пулнă. Именкасси шкулĕнче вĕреннĕ. Вăл тапхăр асран каймасть. Вĕрентекенсен ытлăшĕ ĕçне пулах хĕрсемпе каччӑсенчен чылайăшĕ аслă çул çине тухма пултарчĕ. Анчах пирĕн малашлăха вăрçă татрĕ. Вăйпиттисем пурте фронтраччĕ. Вăл тапхăрта вĕренÿ çулĕ юпа уйăхĕнчен кăна тытăнатчĕ. Паянхи пек астăватăп: вăрçă тухнă çул, пире, 17 вĕренекене, юпа уйăхĕн пуçламăшĕнче Тăвай районĕнчи Пуянкасси ялĕ çывăхне окоп чавма илсе кайрĕç. Прокопий Гурьевич физик-математик, Клавдия Павловнăпа Клавдия Игнатьевна тата Е.Иванова аслă пионервожатăй пĕрле пычĕç. Колхоз çĕрулми, купăста, ытти çимĕç пачĕ. Вĕсене тиесе лашасемпе вăрăм çула тухрăмăр. Хамăр çуран утрăмăр. Паваркассине çитсен тĕттĕмленчĕ. Хваттере кĕтĕмĕр. Тепĕр кунхине Пуянкассине çитрĕмĕр. Колхоз правленийĕн çуртĕнче хуралçă улăм сарса пачĕ. Тепĕр кунне çынсем патне хваттере ячĕç. Раштав уйăхĕн 28-мĕшĕччен кунта вăй хутăмăр, шăннă çĕре чаврăмăр. Сивĕччĕ, питсене тăм илетчĕ.

Иртнĕ вăхăта паянхи евĕр куç умне кăларать кил хуçи хĕрарăмĕ.

– Тăвай районĕнчен килтĕмĕр кăна, шкулта хутса ăшăтма вутă çукран пире, 10 çынна, Сурăм вăрманне кăларса ячĕç. Каярах, вĕренĕве вĕçлесен виçĕ кунтанах, Атăл леш енне вăрман касма ăсатрĕç. Пĕр уйăх тăрмашрăмăр ваттисемпе пĕрле.

Киле таврăнсан хĕре Молотов ячĕллĕ колхоза счетовода лартаççĕ. 16 уйăх тăрăшать çакăнта вăл. 1943 çулхи раштав уйăхĕнче вара Зинаида бухгалтер ĕçне кÿлĕнет. Тепĕр тапхăртан ăна аслă бухгалтер çумне çирĕплетеççĕ. 1975 çултан пуçласа мĕн тивĕçлĕ канăва тухиччене çак лава туртать вăл. Унăн Хисеп тата тав хучĕсен, тав çырăвĕсен шучĕ те çук. Сăнÿкерчĕкĕ те Хисеп хăми çинчен кайма пĕлмен.

1946 çулхи çурла уйăхĕнче Зинаидăпа Илья Павлов çемье тĕвĕлеççĕ. И.Павлов Пикшик ялĕнче çуралнă. Арçын хаяр вăрçă витĕр тухнă. Украинăн 2-мĕш фрончĕн 6-мĕш çарĕн йышĕнче çапăçнă, отделени командирĕ пулнă. Зинаида Ивановна паян кунччен мăшăрне сăпайлă пулнăшăн, унри мĕнпур ырă енсемшĕн хаклать. 35 çул пĕрпĕрне хисеплесе, килĕштерсе пурăннă вĕсем, виçĕ ача çуратса ÿстернĕ.

– Ултă мăнук, сакăр кĕçĕн мăнук, кĕçĕн мăнукăн ачи Марк – 1 çулта – килсех çÿреççĕ. Вĕсем пăрахманшăн, манманшăн савăнатăп, – тет тыл ветеранĕ. – Тек вăрçă ан пултăр, çĕр çинче мир хуçалантăр.

**Татьяна БОРИСОВА.**
Красноармейски районĕ.

ЫРĂ ТĔСЛĔХ

# Амăшĕн телейĕ – ачисенче

**Ача-пăча сассипе кулли янраса тăракан килте пурнăç илемĕ, интересĕ, тĕллевĕ пур. Кашни ашшĕ-амăшĕ тĕпренчĕкĕ сывлăхлă, ĕçчен те сăпайлă, çĕршыва юрăхлă пултăр тесе тăрăшать.**

"Мĕн чухлĕ ача – çавăн чухлĕ хуйăх" е "Мĕн чухлĕ ача – çавăн чухлĕ савăнăç" каларăшсене часчасах илтме пулать. Çапла, пĕр ача та – вуннăшĕ кăтартманнине кăтартма, вунă ача та пĕри чухлĕ хуйăхăртмасăр ÿсме пултарать. Вуннах мар та, сакăр ача – тăватă ывăлпа тăватă хĕр – çуралнă Мăнçырма ялĕнчи туслă та ĕçчен Павловсен çемйинче. Саккăрмĕш ачи тăватă уйăхра чухне çемье пуçĕ Николай Михайлович пурнăçран уйрăлса кайнă. 37 çула та çитеймен Людмила Анатольевнăшăн канăçсăр вăхăт пуçланнă.

Вăл 1956 çулта тăватă ачаллă çемьере çуралса ÿснĕ. Аттестат илнĕ Люда Канашри педагогика училищине вĕренме кĕнĕ. Дипломлă çамрăк педагог Мăнçырмари вăтам шкулта ĕçлеме пуçланă: малтан – шкул çумĕнчи интернатра /Çĕнĕ Вĕренер ялĕнчен вĕренме çÿрекенсем пурăнатчĕç унта/, кайран – вăрăмлатнă кун йĕркипе ĕçлекен ушкăнра. Ачаранах воспитатель вырăнĕнче ÿснĕскер вĕренекенĕсемпе часах пĕр чĕлхе тупма пултарнă Людмила Анатольевна.

2013 çулта тивĕçлĕ канăва тухнă хыççăн вăл хĕрĕсемпе ывăлĕсене 12 мăнукне пăхса ÿстерме пулăшать.

"Пĕчченйывăр, 8 ачана вĕрентсе кăларасси пулмасть пуль", – тесе ларман вăл. Пепкисем пурте пурнăçра хăйсен вырăнĕсене тупнă, вĕренсе диплом илнĕ, çемье çавăрса ачи-пăчипе савăнса пурăнаççĕ.

Йышлă çемьере ачасем пĕр-пĕрне пулăшса çитĕнеççĕ, аслисем кĕçĕннисемшĕн ашшĕ-амăшĕ вырăнне юлаççĕ. Пурнăçăн çак саккуне тытса пымасан Людмила Анатольевнăна çăмăлах килмен пулĕччĕ: ĕçе кайиччен шкула каяканнисене те, киле юлаканнисене те ĕçтерсе-çитерселле, тумлантармалла, çав вăхăтрах кил-çуртне те йĕркере тытмалла.

Амăшĕн савăнăçĕ – куç тулли ытарайми ачисенче. Маттур, ырă кăмăллă, пултарулă ывăлсемпе хĕрсемпăхсаçитĕнтернĕкилăшшин управçи Людмила Анатольевна. Кунтан ним тĕлĕнмелли те çук, амăшĕ хăй те, ултă теçетке çула хыçа хăварнă пулсан та, пĕрпĕр çамрăкран та ирттерет. Хĕр чухнехи чиперлĕхпе ятулăхне те çухатман вăл. Уявсенче 27 мăшăр ура тĕпĕртетет ăшă та хăтлă Павловсен килĕнче, 27 мăшăр куç ăшшăн пăхать йышлă ача амăшне – Людмила Анатольевнăна. Вăл пурне те çĕнĕ утăмсем тума хавхалантарать.

**З.ИЛЛАРИОНОВА,**
**Вăрмар районĕнчи Мăнçырмари хĕрарăмсен союзĕн ертÿçи.**



ПРАВИТЕЛЬСТВĂРА

# Ĕçлĕ килĕшӳсене алă пуснă

**«Трактор завочĕсем» концернăн Чăваш Енри предприятийĕсем Тулашэкономбанкран 2 миллиард тенкĕ патнелле илме пултараççĕ, çак укçана вĕсен парăмĕсене татма тата предприятисене аталантарма ярĕç.**

Çакăн пирки ЧР Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** Сочире нарăсăн 27-28-мĕшĕсенче иртнĕ инвестици форумĕнче ТАСС информагентствăна панă интервьюра пĕлтернĕ. Михаил Васильевич каланă тăрăх – маларах ВЭБ концернăн парăмĕсене татма 3,7 миллиард тенкĕ уйăрнă. Çапла вара унăн Чăваш Енри производство площадкисем кăçал ĕçлесе каймалла.

Çавăн пекех Михаил Игнатьев Шупашкарти индустри паркĕн иккĕмĕш черечĕ çĕнĕ 1,5 пин ĕç вырăнĕ йĕркелеме май парассине çирĕплетнĕ: «Çак площадкăра пĕчĕк тата вăтам бизнеса аталантарăпăр. Унта ĕçлекенсен шалăвĕ республикăри вăтам шайран чылай пысăкрах пулĕ». Иккĕмĕш черет территорийĕнче пĕтĕмпе 26 резидент вырнаçмалла. Паркăн пĕрремĕш тапхăрĕнче 23 гектар йышăнакан территорире 10 резидент ĕçлеме пуçланă.

Форум вăхăтĕнче Чăваш Ен делегацийĕ Римри Никколо Кузано ячĕллĕ телематика университечĕпе республикăра вăрлăх çитĕнтерекен селекци центрне уçассипе çыхăннă калаçусене малалла тăснă. Çак пуçарăва РФ ял хуçалăх министрĕ **Александр Ткачев** та ырланă. Михаил Игнатьев ЧР Министрсен Кабинечĕпе Рим университечĕн килĕшĕвне, Сĕнтĕрвăрри районĕнче теплица комплексĕ тăвассине çирĕплетекенскере, алă пуснă. Инвестпроекта пурнăçлани асăннă районта çулталăк тăршшĕпех экологи тĕлĕшĕнчен таса продукци çитĕнтерме май парĕ.

Сочире Чăваш Ен Раççей регионĕсемпе тытакан хутшăнусене çирĕплетекен килĕшӳсем те тунă. Саратов облаçĕн тата Чăваш Республикин правительствисен килĕшĕвĕнче икĕ регион промышленноç, АПК, суту-илӳпе строительство, сывлăх сыхлавĕ, вĕрентӳ, культура енĕпе тачă çыхăну тытса ĕçлессине палăртнă. Саратов облаçĕн кĕпĕрнаттăрĕ Валерий Радаев палăртнă тăрăх – «республикăпа облаç хушшинчи тавар çаврăнăшĕн калăпăшĕ – миллиард тенке яхăн. Килĕшӳ пирĕн хутшăнусене анлăлатма май парĕ. Ман шухăшпа, пирĕн пĕр-пĕринчен вĕренмелли пур».

Çакнашкал килĕшĕве **Михаил Игнатьев** тата Чулхула кĕпĕрнаттăрĕ **Валерий Шанцев** алă пуснă.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ Сочири форумăн «Бюджетсен хутшăнăвĕсем. Пĕртанлăх шыраса» секцийĕн ĕçне хутшăннă. Унта бюджетсен хутшăнăвĕсене лайăхлатас ыйтусемпе РФ Правительствин вице-премьерĕ **Дмитрий Козак,** финанс министрĕ **Антон Силуанов,** Шутлав палатин председателĕ **Татьяна Голикова** тухса калаçнă.

# Çĕрулми паха вăрлăхне республикăрах хатĕрлеме пуçлĕç

**Виçĕмкун Шупашкарти «ЭКСПО-КОНТУР» суту-илӳпе курав комплексĕнче Регионсен хушшинчи IX «Çĕрулми-2017» отрасль куравĕ уçăлчĕ.**



Унта республикăра тата тулашра иккĕмĕш çăкăр тата унăн вăрлăхне туса илекенсем, ăна тĕпчесе çитĕнтерме, пухса кĕртме, упрама сĕнӳсем хатĕрлекен институтсен, çĕрулми лартмалли, пăхса ӳстермелли, хиртен кĕртмелли техника, минерал удобренийĕсемпе хими имçамĕ янтăлакан компанисен представителĕсем хутшăнчĕç. Иртнĕ çулсенче йĕркеленĕ куравсемпе танлаштарсан хальхинче хăйсен продукцине ытларах Чăваш Енрен пуçтарăннисем мар, Раççейĕн тĕрлĕ регионĕнчен килнисем кăтартрĕç. Çĕрулми туса илмелли машинăсемпе суту-илӳ тата курав комплексĕ умĕнчи лапамра паллашрĕç. Хуçалăхсен ертӳçисем вĕсене туянас ыйтăва трактор-машинăпа тивĕçтерекен дилерсемпе сӳтсе яврĕç.

Республика Пуçлăхĕ **Михаил Игнатьев** экспозицисемпе тĕплĕ паллашрĕ, çĕрулмирен пĕçернĕ çимĕçе активсе пахаларĕ.

ЧР Пуçлăхĕ «иккĕмĕш çăкăр» çитĕнтерекен хуçалăхсемпе ятарлă наука-тĕпчев институчĕсем инновацие тĕпе хурса продукци туса илмелли технологисене лайăхлатнине, производствăна ӳстерессишĕн çине тăрса ĕçленине палăртрĕ. Çĕрулмин хуçалăхсенчен туяннă, потребительсене сутнă чухнехи хакĕ тĕрлĕ сăлтава пула улшăнса тăрать. Çакă хресченсене пăшăрхантарать.

– Раççей Президенчĕ Владимир Путин вĕсен умне продукцие чикĕ леш енне ăсатса экспорта аталантарма тĕллев лартрĕ, – терĕ М.Игнатьев. – Ăна пурнăçа кĕртесси – кун йĕркинчех. Республикăра наука аталаннă май çĕрулмин селекципе вăрлăх центрне ĕçе кĕртесси малти вырăна тухса тăрать. «Слава картофелю» агрофирма ăна Елчĕк районĕнче хута ярасшăн. Иккĕмĕш çăкăрăн чи паха вăрлăхне малашне хамăр патăмăртах хатĕрлеме, республикăра çеç мар, тулашра та сутма пуçлăпăр.

Раççейре «иккĕмĕш çăкăр» çитĕнтермелли технологисем чикĕ леш енчисемпе танлаштарсан пĕр енĕпе те кайра мар. Хăшпĕр хуçалăхăн вĕсем лайăхрах та. Çавăнпа паха опыт пухнисен пысăк тухăçпа палăракан технологисене ют çĕршывсене сутасси çинчен шухăшламалла. Чăваш Ен Пуçлăхĕ çĕрулмирен хатĕрленĕ тĕрлĕ çимĕçе экспорта явăçтарас пуласлăх республикăна кĕтнине те палăртрĕ.

Куравра Пĕтĕм Раççейри А.Лорх ячĕллĕ çĕрулми хуçалăхĕн наука-тĕпчев институчĕ те экспозици кăтартрĕ. Унăн тĕпчевçисенчен пĕри **Борис Анисимов** регионсен хушшинчи çĕрулми куравне Шупашкарта ирттерме ахальтен йышăнманнине пĕлтерчĕ.

– Çак ыйтăва татса париччен Чăваш Ен çĕрулми туса илекен регион пулнине тĕпе хунă, – терĕ. – Паян куравра Раççейри «иккĕмĕш çăкăр» туса илекен мĕнпур йышши компанисемпе предприятисем хăйсен продукцийĕпе, çĕнĕлĕхĕсемпе паллаштараççĕ. Вĕсен представителĕсене Шупашкарта тĕл пулса калаçма, çĕнĕ технологисене кăтартма, килĕшӳсем çирĕплетме май туса пани пысăк пĕлтерĕшлĕ. Усăллă çыхăнусем йĕркелесе производствăна татах ӳстерĕпĕр.

**Курава йĕркелесе ирттерме Раççей Ял хуçалăх министерствипе Çĕрулми союзĕ тӳрремĕнех хутшăннă, асăннă институт пулăшнă. Çĕршыври 22 регионран тата Беларуçран килнĕ 86 экспонат хăйĕн продукцийĕпе паллаштарнă.**

Виçĕмкунах комплексра «Импорта улăштарнă чухнехи çĕрулми индустрийĕн инноваци аталанăвĕн ларутăрăвĕпе пуласлăхĕ» наука-практика конференцийĕ иртрĕ. Ăна ЧР ял хуçалăх министрĕ **Сергей Артамонов** ертсе пычĕ.

**Хамăр инф.**

Василий КУЗЬМИН сăнӳкерчĕкĕ.

*Çырăнтару-2017*
**"Хыпар" Издательство çурчĕн кăларăмĕсене**
**2017 çулăн II çурринче илсе тăмашкăн çырăнтарма пуçланă.**
**Пуш уйăхĕн 31-мĕшĕччен**
**«ХЫПАРА» – 624 тенкĕпе, «ХЫПАР-эрнекуна» – 286,92 тенкĕпе,**
**«ЧĂВАШ ХĔРАРĂМНЕ» 316, 74 тенкĕпе кашни çыхăну уйрăмĕнчех çырăнтараççĕ.**

САМАХ ПАРĂР-ХА

# Ют тутăра çыхмалла мар

Марина ТУМАЛАНОВА

**«Мĕн те пулин çитерейм ĕр-ши? Пирĕн укçа пур тӳлеме. Эпир виççĕмĕш кун нимĕн те çимен. Мунча пулсан халех хутсан тем пекехчĕ. Виçĕ эрне ытла вăрманпа утрăмăр. Эпир халь пӳртрен тухса кайăпăр та мунча патĕнче ларăпăр. Пирĕн çинче пыйтă йăшăлтатни курăнать. Пыйти те, шăрки те купипех. Пӳртре лармăпăр, сире пыйтлантарас марччĕ...» – Ангелина Павловскаян «Вĕрене шывĕ те пылак» романри Анна сăмахĕсене аса илтертĕм. Вĕсене колхоза кĕменшĕн халăх тăшманĕсем тесе Çĕпĕре ăсатнă. Каялла тарса килекенскерсен çулĕ ытла тумхахлă пулнă. Нумай йывăрлăха çĕнтерме вăй çитернĕ чăваш хĕрарăмĕпе тутар каччисем.**

**Халĕ тулăх пурăнатпăр. Çимелли те, ĕçмелли те çителĕклех. Ялта та, хулара та мунча шыраса çӳремелле мар. Пыйтăран кăна çаплах хăтăлаймастпăр. Хăйĕн çинчен аса илтерсех тăрать вăл.**

**Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-90-мĕш çулĕсенче шкулта мĕнешкел ĕрчесе кайнăччĕ юн тухичченех çыртакан кăпшанкă. Ăна пĕтерес тесе пуçа мĕнпе кăна çумастчĕç-ши? Хĕрачасем шăркана шурçырли сĕткенĕпе кăларма хăтланатчĕç. Педикулезран вăхăтра сипленмесен урокран киле яни те пулнă.**

**«Пирĕн класри хĕрачасен пуçĕнче пыйтă тупрĕç. Хальхи вăхăтра шкула педикулез килсе çакланасси шухăшра та пулман. Хамăн та пуç кĕçĕтет. Пыйтă ернĕнех туйăнать. «Пуçна куллен çăватăн. Пыйтă çуках ĕнтĕ», – лăплантарать мăшăр. Ара, сикенскер пуç çунипе çуманнине пăхмасть вĕт», – нумаях пулмасть ашшĕ-амăшĕн пухăвĕнче калаçу пуçарчĕ класс ертӳçи.**

**Ача садĕнче ĕçлекенсем те педикулез çинчен лайăх пĕлеççĕ. Воспитатель çӳç çивĕтленĕ май пĕрин пуçĕнче пыйтă тупнă. «Халь кăна килсе çакланнă пулмалла, çавăнпа тӳрех тыттарчĕ. Шăрка та çукпа пĕрех», – тет вăл. Пыйтине те, шăркине те хăех вĕлернĕ нумай çул ĕçлекенсер. Шăв-шав та çĕклемен. Çавăн чухнех ыттисен пуçне тĕрĕслеме пуçланă. Урăх никама та педикулез аптăратманнине тӳрех палăртнă хĕрарăмсем. «Уявра хăнара пулнăччĕ. Ачасем пĕрле вылярĕç. Çавăнта ернĕ ĕнтĕ», – уççи-хуппине шырать хĕрача амăшĕ.**

**Пыйтă тупнăшăн шкул ачисем кăна мар, садик ӳсĕмĕнчисем те аванмарланаççĕ. Çӳçре кăпшанкă йăва çаварни, паллах, намăслантарать.**

**Чăваш Республикинчи гигиенăпа эпидемиологи центрĕн кăтартăвĕсем тăрăх, юлашки вăхăтра çулленех пыйтă ернĕ 240-375 тĕслĕхе шута илнĕ. Çапах педикулезпа чирлисен йышĕ чакса пынине палăртма кăмăллă. 2016 çулта, сăмахран, 2012 çулхипе танлаштарсан, республикăри пĕтĕмĕшле кăтарту 1,5 хут пĕчĕкленнĕ.**

**Юлашки 5 çулти пĕтĕмлетӳ Канашра, Улатăр, Сĕнтĕрвăрри районĕсенче педикулезпа чирлисем йышлăрах пулнине çирĕплетнĕ. Ачасем, мăн çынсемпе танлаштарсан, 5,5 хут ытларах чирлеççĕ. 3-6, 7-14 çултисен педикулез ертес хăрушлăх пысăкрах.**

**Пыйтă çыртнă вырăна алăпа лекмесĕр май çук, çавăнпах пуç ӳчĕ хĕрелет. Вăхăт иртнĕçемĕн хăех иртет вăл. Анчах ăна пула дерматит, экзема аптăратма пултарать. Хавшак иммунитетлисен çăпан тухас хăрушлăх пур.**

**Пыйта май пур таран хăвăртрах пĕтермеллине кашниех пĕлет. Шăркана та хăвармалла мар. Халĕ медицина ĕçченĕсем киле пырсах педикулезран сиплеме пулăшаççĕ.**

**Сывлăх сыхлавçисем ашшĕ-амăшне ача пуçне эрнере пĕрре тĕрĕслеме сĕнеççĕ. Çавнашкалах ют çынсен хатĕрĕпе, уйрăмах калпакпа, тутăрпа, усă курма юрамасть. Паллах, таса тумтир тăхăнмалла, вырăн хатĕрне тăтăш улăштармалла.**

АНАТАЛЛА-ТĂВАЛЛА

# Шурă чăрăш вăрманĕнчи, çÿп-çап купи çывăхĕнчи ял,

## е чăх-чĕпе тортпа тăрантарни çинчен

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр.)

### Пахча хыçĕнче – свалка

"Питтукассинче пурăнатăп", – теме те намăсчĕ. Çак яла çынсем свалка çывăхĕнче вырнаçнипе лайăх пĕлеççĕ. Апла тăк унта ырă мар шăршă кĕрет", – пытармаççĕ шухăшĕсене çамрăксем.

Халĕ кирлĕ мар хатĕр-хĕтĕр юр айне пулнă. Çавăнпах сăмсана çуракан шăршă сирĕлнĕпе пĕрех.

Пахча хыçĕнчен 500 метртанах свалка пуçланакан ялта çынсем мĕнле пурăнăши? Вĕсен урăх çĕре куçма та май пулнă вĕт. "Аттеанне çуртне епле пăрахăн? Эпир çакăнтах тымар янă", – калаçăва хутшăнаççĕ аслă ăру çыннисем. Тухса кайса урăх çĕрте вырнаçма, паллах, укçа-тенкĕ кирлĕ. Тен, çавăнпах çине тăман вĕсем? Ял пĕтсе мар, пачах тепĕр май, ÿссе пыни вара куç умĕнчех.

Истори докуменчĕсенчен çакă паллă: Питтукассинче 1999 çулта 99 çурт пулнă, унта 337 çын пурăннă. Халĕ кунта 156 кил-çурт, çакăнта тĕпленнисен йышĕ те хушăннă. Кунта чăвашсем XVII ĕмĕр пуçламăшĕнче килнĕ теççĕ. Тăрăн икĕ çырма хушшинчи шур чăрăш вăрманĕнче ял пуçланса кайнă. Иртнĕ ĕмĕрĕн 20-мĕш çулĕсенче колхозсем йĕркеленнĕ май правлени çуртне хăпартмашкăн йывăççене касма тытăннă.

Иртнĕ ĕмĕр вĕçĕнче качча килнисене, сăмахран, хула çывăхĕнчи ялта пĕчĕк пÿртсем пулни тĕлĕнтернĕ. Унтанпа кермен пек çуртсем çине-çинех хăпарса ял сăнне улăштарнине хам куртăм. "Ахăртнех, свалка хупăннă хыççăн çакăнти çĕр лаптăкĕ палăрмаллах хакланĕ", – шухăшлать ял-йыш. Вĕсем каланă тăрăх, пушă çĕр шыракан малтан та пулнă.

"Висĕ хула хушшинче пурăнатпăр", – теççĕ хăйсем пирки Питтукассисем. Шупашкара çуранах утаççĕ. Çĕнĕ Шупашкара çитме те инçе мар. Çул урлах вырнаçнă Çĕнĕ хула микрорайон капăр курăнать. Вăл Шупашкарăн – пĕр пайĕ. Çапах ăна та çынсем тепĕр хула пекех йышăнаççĕ.

Питтукасси ял тĕлĕшĕпе тĕрлĕ проект хатĕрленĕ. Пĕр вăхăтра çынсем пÿртсене çĕмĕрме пуçлаççĕ тесе ялтан хулана куçма та хатĕр пулнă. "Халĕ нумай хутлă çурт чÿречинчен пăхса ларатпăр", – шÿтлеме те пĕлеççĕ хĕрарăмсем.

### Çула юр хуплана

"Питтукассинче хăвармалла терĕм вĕт", – ГАЗель чарăнуран иртсе кайсан вăрçăнма пуçларĕ шашкă кĕрĕклĕ хĕр. Эпĕ те, вăл та ял патĕнче хăварма ыйтнине илтмен пулмалла водитель. Килне васкаканни Çĕнĕ хула еннелле пăрăнчĕ. "Свалка çывăхрах пулнине пăхмасăрах çак микрорайона хваттер туяннă-и эсир?" – юлмастăп унран. "Шăршине питех туйман", – ĕнентересшĕн вăл.

Питтукассинче библиотекăсăр пуçне урăх организаци çук. Çынсем Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта ĕç вырăнĕсем тупнă. Наталья Павлова библиотекарь свалка хупăнасса кĕтнине, ĕмĕт çитнишĕн савăннине пытармасть.



ЯЛТА ÇУРТ ШУЧĔ ТЕ,

Зайцевсен килĕ çумĕнчен иртсе свалкăна çитерекен çула юр хÿсе лартнă. Халĕ никам та çунашка туртса утмасть. Малтан ял çыннисем çак сукмака такăрлатсах тăнă. Шоссе пекех яка пулнă вăл. Мĕн шыранă вĕсем çÿп-çап купинче?

"Чăх-чĕп валли торт йăтаттăмăр. Миххи-миххипе çăкăр тиесе килеттĕмĕр – ăна унта машини-машинипе килсе тăкатчĕç. Ăна вылăха хĕлле çитерме типĕтеттĕмĕр. Хуçалăхра кирлĕ савăтсапа пуçтараттăмăр. Çÿп-çап вырăнĕнчен илсе килнĕ супăньпе çаплипех усă куратпăр", – каласа кăтартать Светлана Павлова. Çÿп-çап вырăнĕнчен вутă турттарнă. Тĕслĕхрен, хула çыннисем пластик кантăк лартнă та йывăç рамăна пăрахнă. Вăл мунча хутма, кĕлетре вылăх апачĕ пĕçерме чухах. Унсăр пуçне сăра, минерал шывĕ, кăлпасси, канфет, маргарин, чипс, кофе, пахчаçимĕçпе улма-çырла… купи-купипе, курупкикурупкипе йăванса выртнă. 75 çула çитнĕ хĕрарăм паян та свалкăна кайса килме хирĕç мар та... "Машинăпа темĕн те пĕр тиесе килсе тăкма пăрахнăранпа ĕç те çук", – тет вăл.

Светлана Ивановна 7-мĕш класс хыççăнах фермăра ĕçлеме пуçланă. Чăх-чĕп, сурăх, сысна пăхнă. Кайран 30 çул ытла пир-авăр фабрикинче вăй хунă. Халĕ те чăх-чĕп, сурăхсем усрать.

### Хăйсем те çинĕ

Çынсем свалкăри апат-çимĕçпе вылăха тăрантарнине уççăнах калаççĕ. "Укçа çитсе пыман вăхăтра пуçтарса килнĕ çăкăр-кăлпассие хамăр та çинĕ", – пытармаççĕ теприсем. Типтерлĕ хĕрарăмсем сăра кĕленчисене нÿхрепе антарнă. Кайран мунчаран милĕкпе çапăнса тухнă арçынсене ăш хыпнине иртterме кăларса панă вĕсене. Эх, хĕпĕртенĕ çакăншăн кил хуçисем!

Çав вăхăтрах çÿп-çап вырăнĕнчен йăтнă апатпа çитĕнтернĕ вылăх какайне, чăх-чĕп çăмартине çиме йĕрĕнекенсем те тупăнчĕç. Вĕсем, паллах, свалкăна çул хывман.

Хăшĕ-пĕри тумтир, атă-пушмак суйласа тăхăннă. Çи-пуç кĕсйинче укçа тупакан та пулнă теççĕ. Нумайăшĕ тĕслĕ, хура металл пуçтарнă. Урамри çамрăксем çапла майпа 2 сехетре 2-шер пин тенкĕ алла кĕнине хавхаланса каласа кăтартаççĕ. /Унпа эрех мар, кирлĕ хатĕр туяннă пулсан тем пекехчĕ/.

Зайцевсем арăмĕпе упăшки сменăпа ĕçленĕ. Апла пулин те хăш чухне 3 тĕпренчĕкне килте питĕрсе хăварма лекнĕ. "Çÿп-çап вырăнĕ çуннă вăхăтра çулăм пÿрт çине сиксе ÿкнĕех туйăнатчĕ. Çакна аякран курса мĕн чухлĕ куляннă! Киле хăра-хăра пĕтĕм вăйран чупнăран ура хытсах ларатчĕ", – аса илет Галина Ивановна.



ХАЛĂХ ЙЫШĔ ТЕ ÜСЕТ.

Свалкăран йĕкехÿре яла иленнĕ. Вĕсем пахчара е картишĕнче чашăк таврa тăрса апат çинине те курнă çынсем. Унсăр пуçне çÿп-çап вырăнĕнчен çатăрка хутаççем çилпе вĕçсе килнĕ. Купикупипех пуçтарнă çав йăх-яха ял халăхĕ. Кĕтÿççене пушшех чăрмантарнă вăл. Унсăр пуçне вырăнăн-вырăнăн тарakансем пуçтарăннине асăрханă çынсем.

"Свалкăна ăпăр-тапăр турттарса килекен машинăсем халĕ те куç умĕнчех. Эпир те çавăнтах тăратпăр пек..." – çÿп-çап вырăнĕнче çÿрени, тен, яланлăхах вĕсен асĕнче çырăнса юлĕ.

Светлана Ивановнăпа Галина Ивановнăна сăн ÿкерсе илесшĕнччĕ. Вĕсем пăрса пек тарса çухалчĕç. "Массăллă информаци хатĕрĕсенчен пирĕн тăрăха малтан та килнĕ. Эпир ун чухне те хамăр сăна кăтартман, халĕ пушшех сăн ÿкерĕнместпĕр", – терĕç вăр-варскерсем.

### Урамра çутă çук

Иртнĕ ĕмĕрĕн 75-мĕш çулĕсенче ялта 85 ĕне таран тытнă. Халĕ пур çĕрте те вылăх йышĕ чакнă. Паян 7 килте кăна ĕне усрани никама та тĕлĕнтермĕ. "Малтан, вăй пур чухне, ĕçе кайиччен сĕте хулари хваттер хуçисене сутса хăвараттăм. Темле пулсан та вылăх апачĕ шыраса свалкăна утман. Халĕ эмел илме укçа нумай кирлĕ. Шăмăшри фельдшерпа акушер пунктне е Шупашкар район больницине кайса килме питĕ кансĕр. Электрон черете тăма Интернет çук. Пире Çĕнĕ хулари поликлиникăсăр йышăнсан мĕнешкел лайăхчĕ", – чунне усать Маиса Демьянова.

Ял халăхĕ таврара чир-чĕр алхаснăшăн кулянать. Тен, свалка сывлăха усал витĕм кÿнĕ? Хăй вăхăтĕнче сывлăша ятарласах тĕрĕсленĕ. Анчах пĕтĕмлетÿпе халăха паллаштарман.

"Анне Етĕрне районĕнчен 3 тĕпренчĕкĕпе куçса килнĕ çакăнта. Автобусран тухсанах çĕрĕк шăрши кĕнĕччĕ, тĕтре сисчĕвлентернĕччĕ. "Ăçта илсе килтĕн эсĕ пире?" – тенĕччĕ ăна.

Каçхине çуса çакнă япаласене свалка шăрши çапатчĕ. Ирхине типĕ çи-пуçа пуçтарса шыва тепре чикеттĕмĕр", – çĕнĕ пурнăç пуçланине аса илет Светлана Михайлова.

Ял халăхĕ урамсене çутă çуккишĕн кăмăлсăр. Çакăншăн вырăнти ял администрацийĕ яваплă. "Ку ыйту ытти ялсенче те çивĕч. Электроэнерги кабельне улăштарма нухрат кирлĕ. Укçа-тенкĕ вара çитсе пымасть", – ăнлантарчĕç Шупашкар районĕнчи Çĕньял ял администрацийĕнче. Питтукассине мĕн чухлĕ укçа уйăрмаллине депутатсен пухăвĕнче палăртĕç.

Ял старости Маргарита Сергеева, тĕслĕхрен, свалка вырăнĕнче тÿпенелле кармашакан йывăççем çитĕннине курасшăн. Вара ял халăхĕ усă сывлăшпа кăкăр тулли сывласа киленĕ.

Питтукасси хĕрĕ Екатерина Недайкаша Краснодар тăрăхне кайсан мăшăр тупнă. Çак çемье Чăваш Республикинче хăйне хăтлă туять. Вĕсем икĕ ача çитĕнтереççĕ. Çамрăк амăшĕ çуралнă вырăнтан аякка куçасшăн мар. Çĕнĕ хулара хваттер туянас шухăш та пур мăшăрăн. Свалка вырăнĕ ача-пăчапа уçăлса çÿремелли лапама çаврăнасса шанаççĕ-кĕтеççĕ вĕсем.

**1964 çулта уçнă свалкăна çур ĕмĕр ытла Шупашкарпа спутник-хула каяшĕсене тăкнă. 2015 çулхи кĕркунне тинех хупăнчĕ вăл. 30 гектар ытла çĕре рекультивациленĕ хыççăн тавралăхри санитарипе эпидемиологи лару-тăрăвĕ палăрмаллах лайăхланĕ.**

**Марина ТУМАЛАНОВА.**
Автор сăнÿкерчĕкĕсем.

ХĂРУШСĂРЛĂХ

# Çуран çӳрекенсем те айăпа кĕреççĕ

**Çул çинчи инкексенче ытларах руль умĕнче ларакансене айăплама хăнăхнă эпир. Сăлтавсăр мар-ха, анчах çуран çӳрекенсем те йĕркене тăтăшах пăсатпăр-çке...**

Иртнĕ эрнере журналистсемпе тĕл пулнă май ЧР ШĔМĕн ÇÇХПИ пуçлăхĕ Владимир Романов шăпах çуран çӳрекенсемпе çыхăннă инкексем тавра калаçу пуçарчĕ. Кăрлач уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕччен республикăра çуран çӳрекене таптанă 81 тĕслĕхе шута илнĕ. Çакă пĕлтĕрхинчен 37,3 процент нумайрах. Вĕсенче 11 çын вилнĕ, 75-шĕ аманнă. Чи сисчĕвлентерекенни – инкексенчен çурри яхăн тĕслĕхре /46,9 процент/ çуран çӳрекенсем хăйсем айăплă!

– Çул урлă каçмалли ятарлă вырăнта та, кун валли уйăрман лаптăкра та пулса иртет инкек. Çуран çӳрекенсем те, водительсем те пĕр-пĕрне çул памаççĕ, – терĕ Владимир Геннадьевич.

Çул урлă каçмалли ятарлă вырăнсенче 31 инкеке палăртнă. Çапах вилекенсем пурте çул урлă ятарласа уйăрман вырăнта каçнă. 50 инкек те çынсем ăçтан килнĕ унтан чупса каçнăран пулнă.

Халăх светофор е зебра инçех мар пуррине пăхмасăрах хăйсене меллĕ вырăнтан каçма кăмăллать çав. Теприсем автомашина çулĕ çине сăлтавсăрах тухаççĕ. Çул хĕррипе çӳрекен те çук мар.

– Вилекенсенчен 9-шĕ хăйсем айăплă. Эппин, водительсемпе кăна мар, çуран çӳрекенсемпе те пысăк ĕç туса ирттермелле, – палăртать ÇÇХПИ тĕп инспекторĕ.

Сăмах май, Владимир Романов палăртнă тăрăх, тĕттĕм вăхăтра ял-хула тулашĕнче çул çинче пынă май кĕçĕннисен те, аслисен те çутатакан япала пулмалли йĕрке пурнăçланмасть. Юрать-ха хăш-пĕр ĕç тумĕ çинче паян кунашкал йăлтăр-ялтăр хăю çĕлеççĕ. Унсăр пуçне нимĕн те çук. Çавăнпах шута илнĕ 81 инкекре те вĕсем 10 çын çинче кăна пулнă. Ыттисен вара – çук. Тумтир çине çĕмăллăн çыпăçакан йăлтăркассем те, тĕттĕмре çутатакан теттесем те темĕн чухлех. Чылайăшĕ вĕсене ачасем валли туянса пама та маннă пулĕ-ха...

Ачасемпе çыхăннă аварисен йышĕ те ӳснĕ. Асăннă тапхăрта кăна кĕçĕннисем 19 хутчен инкеке лекнĕ. Вĕсем те çул урлă ăçтан килнĕ унтан чупса каçма тăраççĕ. Ашшĕ-амăшĕнченех вĕренсе пыраççĕ-тĕр.

Владимир Геннадьевич çынна таптанă хыççăн вырăнтан тарса çухалнă тĕслĕхсем нумайланни çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. Кунашкаллисем пĕлтĕр пулман та. Кăçалхи 20 тĕслĕхрен 15-шĕнче айăплисене тупнă.

– Ăнсăртран таптарăн тăк мĕншĕн тармалла-ха? Мĕншĕн çынна инкекре пăрахса хăвармалла? Эппин – сăлтав пур. Тен, ӳсĕр пулнă, – хăйне евĕр сăлтава уйăрать Владимир Романов.

Пĕтĕмĕшле илсен çултаlăк пуçланнăранпа нарăс уйăхĕн 21-мĕшĕччен республикăри çулсем çинче 181 аварие шута илнĕ, вĕсенче 19 çын вилнĕ, 222-шĕ суранланнă. Аманнисен йышĕнчен 29-шĕ – çул çитменнисем.

**Татьяна НАУМОВА.**

ХĔРАРĂМСЕН КАНАШĔНЧЕ

# Ашшĕн те, амăшĕн те хутшăнмалла

**Республикăри Хĕрарăмсен союзĕ хатĕрленĕ "Килти çураçулăх – çемьери чи пысăк телей" вĕрентӳ программи федераци грантне тивĕçни пирки хаçатра çырнăччĕ. Хальхинче вĕрентӳ учрежденийĕсенче ĕçлекенсем, амăшĕсемпе ашшĕсем çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани парас, çĕршыва юратма вĕрентес тавра калаçмашкăн Шупашкарти 31-мĕш вăтам шкулта пуçтарăнчĕç.**



● ПРОЕКТА СӲТСЕ ЯВАÇÇĔ.

ЧР вĕренӳ министрĕ Юрий Исаев çакнашкал тĕлпулу йĕркелени, опытпа пайланни ачасемпе çыхăннă çивĕч ыйтусене татса пама пулăшнине палăртрĕ.

Ашшĕсен канашĕн ертӳçи Владимир Викторов мероприятисене арçынсем ытларах хутшăнма пуçланишĕн кăмăллă. Вăл тата ытларах ашшĕне хăйсен йышне илесшĕн.

"Çемье обществăн пĕр пайĕ пулнине пĕлетпĕр. Йĕркеллĕ çемьере кăна çĕршыва юрăхлă ачасем çитĕнни тавра та пĕрмай калаçатпăр. Анчах çирĕп çемье чăмăртас тесен мĕн тумалла? Хуравне çитĕнсе çитсен тин тупатпăр. Паян эпир ачана пĕчĕкренех çемьене хаклама вĕрентес тĕллевпе пуçтарăнтăмăр", – терĕ Ыркăмăллăх фончĕн ертӳçи Лариса Игнатьева.

Хĕрарăмсен союзĕн тилхепине тытса пыракан Ольга Зайцева çĕршыва юратасси çемьерен пуçланнине палăртрĕ. Ача телейлĕ пулсан ашшĕ-амăшĕ те савăнăçлă. Общество организацийĕн ĕçне çĕршыв шайĕнче ырлани çине пусăм турĕ вăл. Кăçал çак йыш республикăри тĕрлĕ наци фестивальне йĕркелесшĕн.

Олег Волков профессор анлă тавракурăмлă ашшĕ-амăшĕ ачисемшĕн тĕслĕх пулнине çирĕплетсе каларĕ. Вĕсем пушă вăхăта усăллă ирттерме ăнтăлаççĕ.

ЧР Пукане театрĕн пуçлăхĕ Елизавета Абрамова ачасене театр урлă воспитани парас ĕç малалла пыни çинчен каласа кăтартрĕ. Çамрăк театрал шкулĕ ăнăçлă ĕçлет. Ача-пăча вăйăпа сăнарсем урлă аталанать, вăл е ку лару-тăрура хăйне тивĕçлĕ тытма хăнăхать.

Конференци вăхăтĕнче виçĕ секци ĕçлерĕ. Унта çак проекта хутшăнакан 5 шкулпа 5 ача садĕнче ĕçлекенсем сăмах илчĕç.

Шупашкарти кадетсен 14-мĕш шкулĕн пуçлăхĕ Светлана Иванова вĕсен ашшĕ-амăшĕн пухăвĕ урăхларах иртнине палăртрĕ. Унта, тĕслĕхрен, вĕренекенсене патшалăх службине хатĕрлени çинчен калаçаççĕ. Тĕрлĕ шайри спартакиадăсене, ăмăртусене хутшăнас йĕркене сӳтсе яваççĕ. Шкулта пултарулăх конкурсĕсем тăтăш иртеççĕ. Ачасем уйрăм çĕрте поход условийĕсене хăнăхаççĕ.

"Кадет шкулĕнче пĕлӳ илессишĕнех ял ачисем хулана пурăнма куçнă тĕслĕхсем те пур", – палăртать Светлана Викторовна.

Çĕмĕрлери 1-мĕш шкул директорĕ Татьяна Полякова пысăк йышпа хатĕрленĕ мюзиклсем ачасемпе ашшĕ-амăшне çывăхлатнине палăртать. Пуçламăш класри ачасем тулли çемьере çитĕннине, аслăраххисен, арçынсем аякка ĕçлеме кайнине пула, ашшĕпе амăшĕ уйрăлнине тӳрех асăрхаççĕ вĕрентекенсем. Çавăнпах шкул мероприятийĕсене ачасен çывăх çыннисене чĕнме тăрăшаççĕ. Çак хутшăну витĕмĕпе арăмĕпе упăшки çĕнĕрен пĕрле пурăнма пуçлани, паллах, савăнтарать педагогсене.

Çĕнĕ Шупашкарти 17-мĕш шкул директорĕ Наталья Кротова тĕрлĕ ыйтупа "çавра сĕтел" йĕркеленĕшĕн ашшĕсен канашĕн ертӳçине Алексей Орлова мухтарĕ. Вăл канмалли кунсенче те ача-пăчапа, ашшĕсемпе тĕл пулма вăхăт тупать.

Шупашкарти пуçламăш 1-мĕш шкул пуçлăхĕн çумĕ Татьяна Зверева ачисемпе пĕрле ашшĕ-амăшĕ сцена çине тухни çинчен хавхаланса каласа кăтартрĕ. Çак йыш конкурссенче те мала тухать.

Проект ĕçне малалла тăснă май вĕрентӳ ытти учрежденийĕнче те тĕлпулусем йĕркелĕç.

**Марина ТУМАЛАНОВА.**

ЧР Хĕрарăмсен союзĕн сайтĕнчи сăнӳкерчĕк.

ШУХĂШ

# Çамрăксене çĕр ĕçне явăçтармалла

**2017-мĕш çула республика Пуçлăхĕ Амăшĕпе Ашшĕн çултаlăкĕ тесе палăртнине ырламалла. Çемье – патшалăх тытăмĕн никĕсĕ. Килте йĕрке пур чухне çĕршывра та тăнăçлăх хуçаланать.**

Район хаçатĕнче пичетленекен ЗАГС сводкисенче уйăрăлакан çемьесен хисепĕ час-часах 6-7 таранах. Çакă пире, ватăсене, тарăн шухăша ярать. Иртнĕ ĕмĕрте вăрçă хыççăнхи çулсенче фронтран анчах таврăннă арçынсем çемье чăмăртама васкать. Пурнăç йывăр пулсан та чăваш йăлийĕркипе туй тунă, çырăнмасăрах ача-пăча йышлă çуратнă. Эпĕ астăвасса пирĕн ялта çемье уйрăлнă тĕслĕх пулман. Кирилловсем – 10, Павловсем – 9, Александровсем – 8, Степановсем – 8, Кузьминсем – 7, Владимировсем – 7, Ястребовсем – 6, Андрияновсем – 6, Владимировсем – 5, Анисимовсем 5 ача çуратса ӳстернĕ. Вăрçă ачисем те йывăррине пăхмасăрах сак тулли пепке çитĕнтернĕ: Багровсен – 5, Александровсен – 5, Анисимовсен 4 пулнă. Вĕсенчен нумайăшĕ аслă пĕлӳ илсе çĕршыва юрăхлă çынсем пулса тăнă. Палăртса хăвармалла: иртнĕ ĕмĕрте ялта 70 ытла ача пулнă, вĕсенчен – 30-40-шĕ шкула çӳренĕ. Урамсем вăйă-кулăпа шавласа, кĕрлесе тăнă. Хĕллехи вăхăтра тăвайккисене çунашкапа йĕлтĕрпе ярăнса якатнă. Паян вара ялсенче шăплăх хуçаланать.

Мартынкасси тăрăхне кĕрекен ытти ялта та ача-пăча йышлă пулнă. Вăрçă хыççăнхи çулсенче колхоз уй-хирĕнчи ĕçсене ытларах алă вăйĕпе пурнăçланă. Пулса çитнĕ тыр-пула çурлапа вырнă, çапса тĕшĕлес ĕçсене те ытларах техникăсăрах пурнăçланă. Уттине çавапа çулнă, кĕреплепе пуçтарнă, лаша урапипе турттарнă, купана хывнă. Çак ĕçсене çуллахи каникулта 9-10 çултан аслăрах шкул ачисем пурнăçланă. Çав хушăрах килте те вĕсемех тăрăшнă. Çуллахи шăрăхра е йĕпе-сапара çитĕннисемпе танах 13-14 сехет тар юхтарнă. Çакна пулах арçын ачасем салтака юрăхлă пулнă. Хĕрачасем те качча кайса ача йышлă çуратма пултарнă. Ун чухне кĕçĕннисене йывăр лекни çинчен калаçакан пулман. Вĕсене ĕçе ытларах явăçтарма тăрăшнă. Шкулсен çумĕнче ĕç лагерĕсем, ачасен бригадисем йĕркелесе стройкăсене явăçтарнă. Студентсен отрячĕсем йĕркеленĕ. Ĕç сезонĕсем вĕçленсен наградăсемпе хавхалантарнă.

90-мĕш çулсенче ял хуçалăхĕ арканчĕ те ĕç çуккипе ялти çамрăксем ирĕкелле кайса пĕтрĕç. Пирĕн ялта шкул та пурччĕ, ăна хупнăранпа ывăл-хĕре автобуспа кӳршĕ яла турттараççĕ, 5 ача çӳрет. Пепке çуратакан çамрăк çук. Ял пĕтес хăрушлăх вара пур.

Анчах паян ялти пур-çук шăпăрлана ĕçе хăнăхтарас тĕлĕшпе хирĕçлесе туса хунă йĕркесем мана анчах мар, ытти ватта та килĕшсех каймаççĕ. Çитĕнекен çамрăка ачаран ĕçе хăнăхтарассине эпир шухăшласа кăларман. "Ачана сак урлă выртнă чухне ăс пама тытăнмалла", – тесе ĕлĕкех каланă. Тĕслĕх шырама таçта кайма кирлĕ мар, хамăр ялтах пур. Темиçе çул каялла шкултан вĕренсе тухнă çамрăксем ялта паян та ĕçсĕр çапкаланса çӳреççĕ. "Ĕç çук", – теççĕ. Ял тавралла пушă выртакан çĕрсем 20 çул ытла мăян-вăрманпа хупланаççĕ. Кам чарать-ха вĕсене çĕрпе ĕçлеме е выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе укçаллă пулма? Ял çынни мĕн авалтан выльăх усраса пурăннă, çурт-йĕр çавăрнă, çемйине тарантарнă. Ман шухăшпа, паян эрех-сăрапа минренĕ çамрăксене шăпах çĕр ĕçне явăçтармалла.

**Вениамин АРХИПОВ.**

Элĕк районĕ.

АХ, АНЧАХ...

# Савни юратăва сутрĕ

Шкулта вĕреннĕ чухнех саврăм ăна. Пĕрре урлă пурăнакан кÿршĕ хĕрне хăш вăхăтран юратма пуçланине, тĕрĕссипе, палăртаймастăп та. Мĕн ачаранах пĕрле выляса ÿснĕ эпир. Шкула та пĕрре мар юнашар утнă. Сарăскер, хÿхĕмскер чылай каччă кăмăлне каятчĕ. Вуннăмĕш класра вĕреннĕ чухне вара вăл чунăма пăлхатнине ăнлантăм.

Çулсем иртрĕç. Эпĕ университета вĕренме кĕтĕм. Настя тăххăрмĕш класра вĕренетчĕ ун чухне. Паллах, клуба тухмастчĕ-ха. Çавăнпах эпĕ те канмалли кунсенче яла кайсан унта питех ăнтăлмастăм.

Часах çуллахи каникул та çитрĕ. Верук аппа хĕрне хушăран каçхине урама тухма ирĕк пачĕ. Паллах, эпĕ ку самантпа усă куртăм – кÿршĕ хĕрне киле хам ăсатрăм. Тĕрĕссипе, илсе килтĕм темелле-тĕр. Ун çумне ыттисене çулăхма ирĕк памарăм. Эпĕ ăна курсан çунатланнине пике те ăнланчĕ ахăр. Çавăнпах аллинчен çавăтсан та турткалашмарĕ. Унсăр пуçне хăй те мана килĕштерчĕ.

Çапла пирĕн юрату кунран кун вăй илчĕ. Хăпартлантарчĕ, вăй хушрĕ, çÿл тÿпене илсе хăпарчĕ çутă туйăм. Савса, хавхаланса пурăннă май вăхăт иртни сисĕнмерĕ те. Настя та шкултан вĕренсе тухрĕ. Хулана куçрĕ.

Анчах вăхăт иртнĕ май сăпайлă савнипе тем пулчĕ. Общежити пÿлĕмĕнче пĕрле пурăнакан хĕрсем ясар пулчĕç-ши е ирĕке тухни иртĕхтерчĕ-ши? Час-часах тантăшĕсемпе дискотекăна çÿреме тытăнчĕ. Куншăн ÿпкелемерĕм-ха. Хушăран юрĕ терĕм. Анчах кун йышши савăк каçсем Настя асăланнă май час-часах тăтăшланни сисчĕвлентерчĕ. Сăмахларăм та – ăçта, хăçан мĕн тунине калами пулчĕ.

Çапла савнисĕм иртĕхсех пычĕ. Вăхăт иртнĕ май манран сивĕннине те туйрăм. Паллах, кÿрентерчĕ ку, чĕреме çунтарчĕ, кăмăла хуçрĕ, чунăма ыраттарчĕ. Анчах нимĕн те тăваймарăм. Çакна та каламалла: Настя пĕрремĕш курсра вĕреннĕ чухне савăклантăмăр эпир унпа. Вăрттăн çимĕçе ас тивнĕ хыççăн пушшех улшăннине те каламаллах. Çапах шантăм эпĕ ăна. Ташă каçĕсене çÿрет пулин те сăпайлăхне, чысне çухатмасса ĕнентĕм.

Пиллĕкмĕш курсра вĕренеттĕм эпĕ ун чухне. Диплом хÿтĕлесенех салтака кайма ят та тухнăччĕ. Пĕррехинче ман патăма Настя пусăрăнчăк кăмăлпа çитсе ларчĕ. Савни чарăнмасăр макăрнине хĕрлĕ куçĕнчен тÿрех куртăм.

– Каçар мана, Петя. Пултараймасан – ан каçар. Эсĕ мана питĕ юратнине пĕлетĕп. Эпĕ те сана саватăп. Чăн та, юлашки вăхăтра нумай кÿрентертĕм. Итлемерĕм, кăмăлна та хуçрăм. Анчах кĕлеткемре вĕри юн чупать-çке. Çамрăк чухне юрлас-ташлас килет. Мăшăрланса пурăнма та сахал мар ĕмĕтлентĕмĕр. Хамăрăн çуртра ачамăрсем чупса çÿресси пирки пĕрре мар калаçрăмăр. Анчах... Каçар, каçар, каçар... Урăхла пултараймарăм. Эсĕ салтака каятăн-çке, хырăмпа пĕччен епле юлас? Çамрăк-çке... Çуратма хăяймарăм ăна, пăрахрăм... – антăха-антăха йĕчĕ вăл. – Кун пирки каласшăн марччĕ сана... – аран тухрĕç юлашки сăмахĕсем.

Тарăхма та, кулянма та пултараймарăм ун чухне. Хытса тăтăм. Настьăна куçпа та курас килмерĕ. Çавăнпах ун патне текех каймарăм, шăнкăравламарăм та. Юратнă çын çапла сутнине каçарма мар, ăнланма та пултараймарăм.

Пĕр хушăран çывăх тусăм хĕрсен хушшинче çÿрекен вăрттăнлăха систерчĕ: çуралайман ача манран мар имĕш. Çавăнпах вĕлерме шухăш тытнă та ăна. Кун хыççăн Настука пушшех кÿрентĕм.

Часах çуркунне те çитрĕ. Палăртнă пекех диплом иличчен салтак юрри юрларăмăр. Ăсату каçĕнче кÿршĕ хĕрĕ те пурччĕ. Анчах унпа сăмах хушмарăмăр. Кÿренÿ чунăмра ĕмĕрлĕх сырăнса юлнă çав.

Кун хыççăн кун иртет, çул хыççăн çул. Салтакран таврăннăранпа виçĕ çул çитрĕ ĕнтĕ. Куллен ĕçе çÿретĕп. Машина туянтăм, хваттер пирки шухăшлатăп. Хыççăн чупакан хĕр чылай. Анчах хăшне суйламаллине пĕлместĕп. Ĕмĕрлĕх суран пирчемен-тĕр. Ÿт илеймен сурана тăвар сапасран шикленетĕп, çавăнпах нихăшне те çывăха ямастăп. Настук та тепĕр чухне асăма килет-ха. Пĕрле ирттернĕ савăк вăхăтсем тĕлĕкре те тĕлленеççĕ. Юрататăп ăна. Халĕ те манаймастăп. Юрату хăвачĕ ыратăва çĕнтерет-шим?

Анчах мана вăл хăвăртах манчĕ. Эпĕ салтакра чухне урăххипе паллашнă Настя. Тепĕр тесен, мана кĕтме тупа туман-çке. Пушшех те, эпир уйрăлнăранпа хутшăнман та. Икĕ çул каялла пĕрлешрĕç вĕсем. Чаплă йĕкĕт тупнă текен сас-хура çÿрерĕ ялта. Кĕрÿ хваттерлĕ имĕш, чаплă вырăнта тăрăшать. Арăмне юратать – тата мĕн кирлĕ?

Юлашки вăхăтра çураçуллă çемьере тем лăпках мар курăнать. Хĕрĕпе кĕрÿшĕ Верук аппа патне хăнана килмеççĕ. Ялти карма çăварсем çемьере хирĕçÿ-харкашу тăтăш сиксе тухнине те пĕлеççĕ. Нумаях пулмасть ача çуратайман арăма юмăç патĕнче те курнă пулать. Упăшки айккине чупма тытăннине те пĕлеççĕ карчамассем.

Пĕр енчен шеллетĕп те Настьăна. Çамрăк чухнехи йăнăшне пулах пурнăçне çапса хуçрĕ. Чаплă кермен, хаклă тумтир пирки час-часах сăмахлатчĕ çав. Анчах пуян килĕнче ăшăлăх, ăнлану çук теççĕ.

**ПЕТĔР.**
Елчĕк районĕ.

ЭХ ЧУХ, ÇАМРĂК ЧУХ!

# Сухан

Çеруш Иринăна хытă юратать. Вăл ăна каçхи тÿпери çутă çăлтăра та татса пама хатĕр. Каччăн чĕринче вут çунать, çавăнпах ырă кăмăллă хĕр çинчен пĕр самантлăха та шухăшлама пăрахаймасăр унпа тĕл пулса калаçас вăхăта чăтăмсăр кĕтет.

Акă паян Çеруш, тавралăха каç чăтăрлăхĕ карса илсен, çăмăл автомашинăна ларчĕ те Ирина пурăнакан ял енне çилпе ăмăртмалла тенĕ пек вĕçтерчĕ. Çитсен кабина алăкне уçса симĕс курăк çине çăмăллăн сиксе анчĕ. Ытти чухнехи пекех кантăкран пырса шаккарĕ. Хĕр кĕттермерĕ, чÿречене усрĕ.

– Савнă тусăм, урама тухсам, çăлтăрлă каçра хамăр чунсене юрату кăварĕпе тĕлкĕштерер, – ытарлă та ăшă сăмахсем тупрĕ Çеруш.

– Эсĕ хитре калаçма пултаратăн иккен. Ман пата киличчен пĕр-пĕр поэтăн сăввине вуласа тухмарăн пулĕ, – çепĕççĕн калаçрĕ пике.

– Çук, юлашки вăхăтра пĕр кĕнеке те алла тытман, – суеçтерчĕ каччă. – Сана курсан сăмахсем çăлкуç пекех тапса тухать.

– Ну, юрĕ-çке, кĕттерсе тăмăп, çиччас.

Çеруш çывăхри хурăн патне кайса тăчĕ. Тÿпене тĕсерĕ, ялкăшса çиçекен çăлтăрсене сăнарĕ. Вăхăт нумай та иртмерĕ, Ирина пÿртрен тухрĕ. Иккĕшĕ сак çине вырнаçса ларчĕç. Каччă чăтаймарĕ, хĕре хăй çумне пăчăртарĕ.

– Тÿрех пилĕкрен ан тыт-ха, кăштах та пулин ирĕклĕн ларам, – Çерушăн аллине сирчĕ хĕр.

Тĕрĕссипе, Ирина каччăна чунчĕререн юратмасть. Вăхăта иртермелле çеç тĕл пулать унпа. Кÿрентерес те темест – хăй ăна мар, хулара пурăнакан Ванюша килĕштернине калама ниепле те хăюлăх çитереймест. Мĕнех тăвайăн, чĕрене хушайăмăн-çке. Паянхи тĕлпулу та хĕре вут хыптарма пултараймĕ.

Юнашар ларакан каччă вара пĕр чарăнми калаçрĕ те калаçрĕ, Ирина çав вăхăтра шухăшĕсемпе инçетре çÿрерĕ.

– Эсĕ мана итлетĕн-и? – тăруках хыттăн ыйтрĕ Çеруш.

– Паллах, – çухалса каймарĕ хĕр.

– Çырла пек тутунтан чуптуса илем-ха, – пытармарĕ каччă хăйĕн шухăшне.

– Юрать, эпĕ хирĕç мар, анчах малтан пÿрте кĕрсе тухам, – пĕлтерчĕ пике.

Çеруш хирĕçлемерĕ. Ирина каччăран уйрăлса пÿрте кĕрес вырăнне пахчана тухрĕ те сухан йăранĕ патне васкавлăн çитсе тăчĕ. Йÿçĕ пулнине пăхмасăрах чăмларĕ ăна. Унтан килнĕ çулпа каялла утрĕ. Акă Çеруш пырса тăчĕ те хĕре çинçе пилĕкĕнчен икĕ аллипе ярса тытрĕ. Чуптăвас шухăшпа тутине тăсрĕ кăна:

– Фу, санран чăтмалла мар сухан шăрши кĕрет. Кунашкал чуптума пултараймастăп сана.

– Юрĕ-çке, тепĕр чух. Чирлетĕп, çавăнпа сухан çирĕм, – терĕ Ирина.

Вăл каччăн ытамĕнчен вĕçерĕнчĕ. Çерушăн та сухан шăршиллĕ хĕрпе юнашар тăрас килмерĕ. Кĕçех çăмăл автомашина вырăнтан хускалчĕ.

– Чипер кай, – каччă хăйне чуп-тума пултарайманнишĕн чунтан савăнса алă сулчĕ Ирина.

**Юрий КОРНИЛОВ.**

ХАМĂР ЯЛСЕМ

# Кÿршĕ мана каçарнă




Тивĕçлĕ канăва тухсан аннене пăхма яла килтĕм. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайсан та хулана чун туртмарĕ. Шăплăха, канлĕхе, ирĕке хăнăхрăм. Çынсенчен кая юлас мар тесе качакапа чăх-чĕп усратăп. Чăваш хĕрарăмĕ ачисемпе мăнукĕсене пулăшмасăр пурăнайрать-и вара? Вĕсем те тахçанах яла çул хывнă. Хам та хулана хăнана кайса килетĕп.

«Арçын кăна çитмест сана», – пĕр-пĕр уявра кĕрекене ларсан пуçласçĕ вара хамăр урамри хĕрарăмсем. Кăшт сыпсан кÿршĕре пурăнакан ĕлĕкхи савнине аса илеççĕ. Пирĕн çыхăну тахçанах татăлнă. Вĕсем кăна çакна ăнланасшăн мар. «Улаха каçать-и?» – çак ыйтупа тарăхтарсах çитереççĕ.

...Эпĕ аслă шкула вĕренме кĕмелли экзаменсен расписанийĕпе паллашма хулана кайнăччĕ. Мăнаки хăтлă хваттерĕнче пĕр пÿлĕмне уйăрса пачĕ. Вăхăта ахаль иртерес мар тесе хатĕрленÿ курсне çырăнтăм. Юнашар хваттерте пурăнакан каччă каçсерен усăлса çÿреме чĕнчĕ мана. Ялти Петĕр манăçа тухса пычĕ. Çĕнĕ пĕлĕш Олег тĕрĕне вут хыптарчĕ. Кино, кафе, мороженăй... Манăн пуç çаврăнсах кайрĕ.

Яла таврăнсан Петĕрпе сивĕн калаçрăм. Вăл пурнĕрех хăпманран чуна усрăм, урăххине юратнине пытармарăм. Ĕнерхи савни, яланах лăпкăскер, айккине пăрăнса юлчĕ.

Олег чиперккесене çаврăнсах сăнанине паллашсанах асăрхаттăм. Анчах вак-тĕвек пек туйăнатчĕ çакă. Вăл вĕсемпе мар, манпа юнашар вĕт.

Çемье çавăрсан упăшка ирччченех киле килми пулчĕ. Юлташĕсем патĕнче çывăрать имĕш. Ыйтса тĕпчени вĕчĕрхентеретмĕн ăна. Çавăнпах шăлне çыртса аллине çĕклеме хăтланать.

Ăçта тарса пытанчĕ пирĕн юрату? Пĕр-пĕрне хисеплемесĕр мĕнле пурăнмалла мăшăрăн? Киле манран вăрттăн хĕрарăм илсе килсен чăтăмлăх пĕтрĕ. Вăл эпĕ тархасласа ыйтнăран япалисене пуçтарса тухса кайрĕ. Юрать-ха ачасене çитĕнтерме укçа парса тăчĕ.

Петĕр вара те мана хытă юратнăран çемье çавăрман. Халĕ иксĕмĕр те хăраххăн пурăнатпăр. Эх, вăхăта каялла тавăрма çук çав. Эпĕ Олега мар, Петĕре каччă тухнă пулăттăм.

Ялта куллен пĕрер пăта çапмалла, унсăрăн кил-çурт юхăнать. Манăн пÿрт тăррине витмелле, ăна шалтан-тултан çĕнетмелле. Вите урайĕ çĕрме пуçланă. Пĕр хăми ишĕлсех аннă. Унта качакана хупма та хăрамалла. Те урине хуçĕ вылăх? Хамшăн пулсан пĕр утăм та тăвас çукчĕ. Качакана шеллесе кÿрше каçрăм. Петĕр урай хăмине улăштарма тÿрех килĕшрĕ. Ĕç вĕçлесен ăна чей ĕçме чĕнтĕм. Çав кун хăна килессе пĕлнĕ пекех кукăль пĕçернĕччĕ.

Вăл малтанхи пекех сăмах ваклама юратмасть, çын калаçнине тимлĕ итлет. Çакăнпа усă курса хамăн пурнăç çинчен каласа кăтартрăм. Петĕр çилĕ тытса пурăнмасть, тахçанах каçарнă мана.

Кÿршĕ кил таврашне хăтлăлатма пулăшрĕ. Ахальтен таврăнман эпĕ яла. Шăпа иксĕмĕре пĕрле пурнăç пÿрнине ĕненетĕп. Халĕ эпĕ те арçынлă. Хамăр урамри хĕрарăмсемпе кăмăлтан хутшăнатпăр. Тинех Петĕр улаха çÿренипе касăкланма пăрахрĕç вĕсем. Халĕ эпир унпа пĕрле пурăнатпăр.

**ЕКАТЕРИНА.**

Елена ЛАРИОНОВА

# Хĕрарăм шăпи

Калав

*Йăмăка асăнса...*

/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте/.

Инкек çине синкек тенĕ пек, Наталин ашшĕ чĕрепе аптраса ÿкрĕ. Васкавлă пулăшу машини чĕнтернĕ çĕре арçын калаçайми те пулнăччĕ ĕнтĕ. Больницăра икĕ эрне тытнă хыççăн киле ячĕç, сывалаймасть терĕç. Натали кунĕн-çĕрĕн ашшĕпе юнашар пулчĕ, килне выльăхне апат пама çеç чупса кайса килчĕ. Юрать, çак вăхăтра мăшăрĕ Мускавра пулчĕ те, Наталие тертлентерсе тăмарĕ. Алли-ури ĕçлейми пулнă çынна хĕрĕ кашăкпа çитерчĕ, йăпатса калаçрĕ, айне улăштарса тăчĕ. Чĕлхи çаврăннă пулсан ашшĕ каçару ыйтнă пулĕччĕ-ши тесе те шухăшламарĕ. Хăй унран мĕн чухлĕ асап-терт тÿсни çинчен шарламарĕ. Ашшĕ вара йăвашланнă куçĕпе хĕрĕ çине пăхрĕ те пăхрĕ «Май пулсан иртсе кайнă кунсене каялла тавăрăттăм, хĕрĕме хамăн тăван чĕппĕм пек пăхса ÿстерĕттĕм, вăхăтсăр пурнăçран уйрăлнă мăшăрăма хăрах куçпа та пулин курăттăм», – тесе шухăшларĕ-ши, ÿкĕнме пĕлчĕ-ши, каçару ыйтас шухăш пуçĕнче пулчĕ-ши?

Висĕ эрне асапланнă хыççăн чирлĕ çын шăппăн çеç куçне хупрĕ. Мĕн чунĕ тухиччен хĕрĕ çине тилмĕрсе пăхрĕ. Каçару ыйтрĕ-ши? Натали вара çак çутă тĕнчере пĕр-пĕччен тăрса юлнишĕн хурланса йĕчĕ. Çук, хăйĕн шăпине тиркесе, çÿлти Турра асап-нуша яратăн тесе ылханса йĕмерĕ çамрăк хĕрарăм. Пĕтĕм чун хавалĕпе аслă Турăран пĕр пĕчĕк телей турамĕ ыйтрĕ.

Телейĕ нумаях та кĕттермерĕ, Натали хăй йывăр çын пулнине пĕлчĕ. Çав тери савăнчĕ çамрăк хĕрарăм, вĕçнĕ пек çÿресе килти ĕçсене турĕ, упăшки таврăнасса чăтăмсăррăн кĕтрĕ. Акă пĕлтерĕ те вăл Ваççилие ача ашшĕ пуласси не, вĕсен пурăнăçĕ йăлтах улшăнса кайĕ. Телейлĕ мăшăр пĕчĕк кайăк килессе кĕтсе ăна валли теттесем, илемлĕ тумтирсем илсе хурĕ. Ваççили, тахçанах ача ашшĕ пуласса кĕтекенскер, Наталие алă çинче çĕклесе çÿрĕ. Тен, Мускава та кайма пăрахĕ, мăшăрне йывăр ĕçлеттерес мар тесе. Çук, çук, каймаллах ĕнтĕ – ача çуралсан укçи-тенки ытларах кирлĕ пулĕ-ха. Çавăнпа та Натали мĕнле те пулсан килти ĕçе хăех туса тăрĕ. Ывăл ача пулсан Сашук ятне хурсан аванччĕ те, килĕшĕ-ши упăшки? Ячĕ ниме те пĕлтермĕ-ха вăл, ачи çеç сывă, йĕркеллĕ çуралтăрччĕ. Çак шухăшсемпе çунатланнă Натали мăшăрĕ яла таврăнасса арапах кĕтсе илчĕ.

Ваççили киле яланхиллех хĕрĕнкĕ таврăнчĕ. Хĕрĕнкĕ çеç мар, ÿсĕр тесен те юрать. Темшĕн питĕ çиллес вара хăй, çул çинче юлташĕсемпе хирĕçнĕ-ши? Наталин хăй ача кĕтни çинчен шарламалла та марччĕ пулĕ те, анчах çав таран телей мăшăрне те чун кĕртсех ярĕ тесе шухăшларĕ.

Кĕтмен хыпара илтсен арçын малтанах нимĕн те шарламарĕ, унтан пат-пат утса пырса арăмне кăкăрĕнчен чышкипе тăрăслаттарчĕ. «Кампа чупрăн, кĕрт ами?» – тесе тĕшĕрелсе аннă хĕрарăма урса кайса тапрĕ те тапрĕ …

Натали палатăра тăна кĕчĕ. Мĕн пулса иртнине ăнланас тесе унталла кунталла пăхса каларĕ. «Ача…Мĕнле манăн ача?» – пырса çапрĕ пуçне хăрушă шухăш. Вăл сиксе тăрас тесе тапаланчĕ, анчах палатăна пырса кĕнĕ шурă халатлă хĕрарăм ăна лăпланса выртма ыйтрĕ. «Тухтăрсем йăлтах ăнлантарса парĕç», – терĕ. Часах пысăк мăйăхлă арçын тухтăр килсе кĕчĕ. Вăл Наталие темле пулсан та çирĕп пулма ыйтрĕ. Хĕрарăм йывăр суранланнине пула ачана сыхласа хăварма май килменнине, тата… Натали текех нихăçан та амăшĕ пулаймассине каларĕ. Хăрушă хыпара илтнĕ хĕрарăм сиксе тăрса мăйăхлă тухтăра тĕксе ывăтасшăнччĕ, анчах пуçĕ çаврăнса кайнипе хăй тĕпсĕр шырлана анса кайрĕ...

Шăкăлт-шăкăлт тăвать пуйăс урапи. Вăрмансем, уйсем, ялсемпе хуласем хыçала юлаççĕ. Пуйăсĕ вара малтан-мала чупать... Шухăша кайнă пĕччен хĕрарăм хăйне такам сĕртĕннипе шартах сиксе пуçне çĕклерĕ. Ун умĕнче кивĕ пиншак, пуçне пысăк картус тăхăннă пилĕк-ултă çулти арçын ача тăрать. «Аппа, укçа пар-ха çăкăр илме», – тесе тахçанах шыв курман пĕчĕк аллине тăсать. Арçын ачан пысăк чакăр куçĕ палламан хĕрарăм çине йăлăнса тинкерет. Вăл хĕрарăмăн айăккинче выртакан сумки çине пăхса илсе сурчăкне лăнкăрт çăтать, аллине татах ют çын енне тăсать.

Наталин чунĕ тĕпĕнче темĕн татăлса кайнă пек пулчĕ. Ку ача питĕ çывăх çын пек, ăна тахçанах шыранă пек туйăнчĕ. Чăнах, ытла та чуна çывăх куç-çке, акă пĕчĕк йĕрĕлчĕ тути тем калать, Натали енне тăснă алли вĕттĕн чĕтрет. «Ачам, эсĕ мĕн ятлă? Кам сан аçу-анну? Мĕншĕн кун пек çÿретĕн эсĕ?» – ыйту хыççăн ыйту çуралчĕ хĕрарăм пуçĕнче. Ача Сашук ятлă пулнине пĕлтерсен Натали хăйне тытса чараймасăр пĕчĕкскерне ыталаса илсе хăй çумне пăчăртарĕ. Йăпăртатса юхакан куççульпе тăвăнса çурăмĕнчен лăпкарĕ. Арçын ача та палламан хĕрарăм çумне лăпчăнчĕ, хăйĕн пĕртен-пĕр шанăçĕ пулнине ĕненсе пĕчĕк аллипе мăйĕнчен ыталаса илчĕ те: «Эсĕ манăн анне мар пулĕ те», – тесе сасăпах йĕрсе ячĕ.

Тин çеç пуйăсран анса юлнă хĕрарăмпа ача пысăк ял еннелле каякан анлă çулпа васкамасăр утаççĕ. Хĕвел каç еннелле сулăннă пулсан та таса уйра лăпкă та кăмăллă. Ăшă çил çепĕç аллипе пуçран ачашлать, кăмăла çĕклет. Сарă ыраш хушшинчи путене: «Пĕтпĕлтĕк, пĕт-пĕлтĕк, эпĕ сире пĕлтĕм-тĕк, пĕлтĕм-тĕк», – тесе çине тăрсах пĕтĕмлетет.

## АСĂМРИ ЮРĂСЕМ

# Ан касăр-ха хурăнне

Кĕвви Константин Марковăн
Сăвви Константин Шачкинăн
*Константин Марковпа Альбина Андреева юрлаççĕ*

Пÿрт умĕнчи хурăнне
Ан касăр-ха çуркунне.
Пурпĕр милĕк пулас çук,
Мунча кĕрсе савнас çук.
Пурпĕр милĕк пулас çук,
Мунча кĕрсе савнас çук.

*Хушса юрламалли:*
Пĕве кĕнĕ сар хĕрне
Ан парăр-ха Сăр енне.
Ан татăр хĕр ĕмĕтне
Уйăрса ик чĕрене.

Ÿснĕ-ÿсмен сар хĕрне
Кĕмесĕрех хĕр пĕвне
Пуян тесе çĕн хăта
Ан çураçăр çич юта.

*Хушса юрламалли:*
Пĕве кĕнĕ сар хĕрне
Ан парăр-ха Сăр енне.
Ан татăр хĕр ĕмĕтне
Уйăрса ик чĕрене.

Пÿрт умĕнчи хурăнне
Ан касăр çул варринче

Висĕ мăшăр милĕкшĕн,
Виççĕ мунча кĕресшĕн.
Висĕ мăшăр милĕкшĕн,
Виççĕ мунча кĕресшĕн.

*Хушса юрламалли:*
Пĕве кĕнĕ сар хĕрне
Ан парăр-ха Сăр енне.
Ан татăр хĕр ĕмĕтне
Уйăрса ик чĕрене.

Лăпкă кÿлĕ хĕрринче,
Шупка уйăх айĕнче
Хăçанччен пĕччен ларас,
Хăçанччен çăлтăр шутлас?

*Хушса юрламалли:*
Пÿрт умĕнчи хурăнне
Ан касăр çул варринче.
Висĕ мăшăр милĕкшĕн,
Виççĕ мунча кĕресшĕн.
Пĕве кĕнĕ сар хĕрне
Ан парăр-ха Сăр енне.
Ан татăр хĕр ĕмĕтне
Уйăрса ик чĕрене.

# Эх, аппа

Кĕвви Надежда Заводсковăн
Сăмахĕсем Юрий Сементерĕн
*"Эмине" ушкăн юрлать*

Эс килте, аппамăр,
Пулнă чи асли.
Чи асли, аппамăр,
Пуринчен асли.

*Хушса юрламалли:*
Эх, аппа, аппа, аппа,
Саламлатăп халь сана.
Саламлатăп халь сана,
Сар хĕвел пек туйăмпа.
Эх, аппа, аппа, аппа,
Тав тăватăп халь сана.
Эс çуралнă ырă кун –
Пирĕншĕн те чаплă кун.

Эс çуралнă ырă кун –
Пирĕншĕн те чаплă кун.

Çавăтса çÿренĕ
Эс пире, аппа,
Пурăнма вĕрентнĕ
Эс пире, аппа.

*Хушса юрламалли.*

Тÿпере çут çăлтăр,
Çĕр çинче – тăван,
Ăраскаллă пултăр
Пурнăçу ялан.

*Хушса юрламалли.*

**Рубрикăна Наци радиовĕн ĕçченĕ Ирина ЛАМПАСОВА тытса пырать.**

## ĔÇ КĔВВИ

Гаврил ЛУÇ

# Ĕмĕр манăçми чăнлăх

I

Ыраш пусси. Сăнанăçем вырма ĕçне
Ачалăхăм аса килет уçăмланса.
Хăрушă вăрçă, выçлăх пирĕн чĕрене
Ĕмĕрлĕхе вырнаçнă пуль. Ирех тăрса

Аппасемпе каяттăмăр колхоз хирне.
Кĕлте çыххи туса, майлаштарса хурса,
Алла тытса акăлчансен çурлисене
Вырма пуçлатпăр тăрăшса, хавхаланса.

Çÿлтен сăнать пире чăн тÿпери вучах.
Çисет вăл йăлкăшса, хирти ĕçченсене
Сÿнми телей сунса çунать кашни кунах,
Сисет пуль çав çынсем хăйне тав тунине.

Хĕвел кăнтăрлара... çĕмел çумне ларса
Çиетпĕр çĕр улми уйранпала сыпса.

II

– Гаврил, Наçтуçпала лăш сывăрса кайсан,
Ĕç пуçлама вăхăт çитсен пире вăрат.
Ытла та тутлă-çке вăл ыйхă ывăнсан, –
Таиç аппа çĕмел çумне пырса выртать.

Хирте сывăраймастăп кăнтăрла выртсан:
Хăр тăлăха юлни хурлантарать чуна.
Аннемĕр вилчĕ эпĕ ултă тултарсан,
Репресси аттене ăсатрĕ тайгана.

Хĕветĕр звеньевой манмасть-ха тивĕçне,
Янравлăн кăшкăрать хăй тунă сăрнайпа:
"Апат сехечĕ иртрĕ – тытăнар ĕçе!"
Пурте вырма пуçлатпăр çĕнĕ вăй-халпа.

Çĕр ĕçлекен тыр-пул акса пухса кĕртет,
Тыр вырнă чух çĕр улмипе уйран çиет.

III

Çаваллă вилĕм пирĕн пÿрт алăкĕнчен
Кĕресшĕнччĕ – çемье хастарлăхне пула
Çук, парăнмарăмăр хăрушă вилĕме.
Çуралнисен – ватăличчен пурăнмалла.

Юлсан та тăлăха усмарăмăр пуçа,
Кĕтÿç пушши те уртрăм хул пуççи çине,
Уйра-хирте чухне эп пултăм хам хуçа,
Ялан итлерĕм чун-чĕре мĕн хушнине.

Пуçра ыр шухăшсем нумай пуçтарăнсан,
Калем тытса ларатăп хайлавсем çырма.
Сăвăмсене вулакансем юратнăран,
Хам ĕçĕме пултараймастăп хурлама.

Ĕç – пурнăç тыткăчи, çакна асра тытар,
Ĕçĕмĕре пахаласа мăнаçланар.

# Улăхра

Хавасланса утă çулма тухатпăр,
Пире кĕтеççĕ симĕс çарансем.
Паян кунта вăй вылятса çулатпăр,
Ыран – хыватпăр пысăк капансем.

Сар чечекпе тумланнă аслă улăх
Çилпе илемлĕн, лăпкăн хумханать.
Çава сасси, хаваслă юрă-кулă
Тĕтрелле улăх тăрăх ян! каять.

Тумлам-тумлам шăрçаланса лараççĕ
Çаран çинчи çут сывлăм пĕрчисем.
Эх, çавасем епле аван касаççĕ,
Хыçа выртса юлаççĕ паккуссем.

– Савни, савниçĕм, ăмăртса çулар-и? –
Тинкерчĕ каччă сар хĕре куçран.
– Ялан эп хатĕр, – хĕр хуллен каларĕ, –
Анчах ан юл эс, чунăмçăм, манран.

Хĕвелĕ хыттăн пĕçертме пуçларĕ,
Типет çут сывлăм. Утăри çынсем
Канмашкăн ларчĕç. Юрă янăрарĕ,
Юрра тăнларĕç вăрмансем, хирсем.

# Мехел çитсен

Чечекĕсем хитреччĕ.
Анчах та пăр çапса
Хуçкаласа пĕтерчĕ, –
Тăратăп кулянса.

Мĕскершĕн ыр çанталăк
Сасартăк пăсăлать?
Илемсĕр пĕлĕт-саплăк
Çут хĕвеле хуплать?

Кăра çилсем хускалчĕç
Хĕвел тухăçĕнчен.
Çÿл тÿпене тасатрĕç
Хура пĕлĕтсенчен.

Йăл! кулчĕ çут хĕвел,
Ак çитрĕ ыр мехел.

Йĕпреç районĕ.

# Шурă хĕрарăм, хура континент

**Паян аборигенпа çемье çавăрнă шурă хĕрарăма Африка кирек хăш çĕршывĕнче те курма пулать. Вĕсем хăй вăхăтĕнче картта çинче те аран-аран шыраса тупма пултарнă пăнчăсене упăшкисем хыççăн пĕр шухăшламасăр тухса вĕçтернĕ. Хура-шурă юрату çинчен Раççей наука академийĕн Африка институчĕн наука тĕп сотрудникĕ Наталия Крылова каласа кăтартать.**

## “Фестиваль ачисем”

**– Вырăс хĕрĕсен çакăн йышши пĕрремĕш хутшăнăвĕсем çинчен 1957 çулта Мускавра Çамрăксемпе студентсен фестивалĕ иртнĕ хыççăн пĕлчĕ тĕнче. Тĕрĕсрех, фестиваль кĕрлесе иртнĕ хыççăн тăхăр уйăхран. Метис ачасем çуралнă хыççăн.**

– Шел те, МИХсенче, ун чухне те, халĕ те, идеологи енчен питĕ хитре мар ят пачĕç вĕсене – “фестиваль ачисем”. Манăн 25 çула яхăн пухнă архивра – Африка арçыннисемпе мăшăрланнă пин-пин хĕрарăм историйĕ. Хутшăнусенче юрату та пулнине çирĕплетеççĕ вĕсем. Анчах шеллени ытларах-тăр – çапах та Хура континентран килекенсем чухăн та мĕскĕн пек туйăннă айван пикесене.

**– Фестиваль хыççăнах СССРа Африка “наци кадрĕсем” вирхĕнчĕç.**

– Ун чухне пирĕн çĕршывра скинхед юхăмĕ вăй илменччĕ-ха. Хĕрсен те ют çĕршыв каччипе çемье çавăрмашкăн самай хăюллă пулмаллачĕ. Унта вĕсен дипломĕсене йышăнмастчĕç. Вĕсем тăван кĕтесе текех каялла таврăнаймастчĕç. Африка чухăнлăхĕпе, унта арçынсен гарем пулнипе хăрататчĕç пикесене. Хĕрсем пирки “çăмăлттай” тетчĕç.

## Хутăш çемьесем

**– Кун пек çемьене экзотикăпа танлаштаратчĕç. Хура континентра пирĕн мĕн чухлĕ хĕр арăм пулса пурăнать?**

– Çула çитмен ачисемпе пĕрле шутласан – 40-50 пин. Мароккăра вĕсем пуринчен ытларах, хăш-пĕр çĕршывра вара 3-4-ран ытла мар. Çапах çак континентри кашни патшалăхрах пур вĕсем – хутăш çемьесем.

Чăн та, юлашки вăхăтра статистика пĕтĕмлетĕвĕсем тума йывăртарах. 1993 çул хыççăн тĕрлĕ çĕршыври консульствăсене пĕрлештерчĕç. Халĕ хĕрарăмсен унта çитме темиçе чикĕ урлă каçма тивет. Обязательнăй майпа регистрациленес йăлана та пăрахăçларĕç. Çапла вара хура континентри шурă хĕрарăмсем сĕмлĕхре çухалаççĕ.

**– Мăшăрлану кашнинчех Çӳлти Хăват аллинче мар курăнать. Юратусăр пуçне урăх мĕнле сăлтава пула чăмăртанаççĕ çакăн пек çемьесем?**

– Сăлтавĕ тĕрлĕрен. Пĕрисем епле майпа та пулин чикĕ леш енне тухма ĕмĕтленеççĕ. Теприсен малтанхи упăшки ăнăçсăр пулнă. Çапах та нумайăшне хура арçынсем чăнласах илĕртеççĕ. Мускав пики Саша Сенегалран килнĕ спортсмен Салех çинчен çапла каласа кăтартать: “Ун çине пăхатăп та – вăл пачах та урăхла: хусканăвĕ, калаçăвĕ, пăхни... Вăл тĕлĕнмелле илĕртӳллĕ. Ытлашши чуптуни вĕçĕмсĕр ташша çаврăнать. Европа арçыннисемпе эпĕ çакна нихăçан та туйса курман”.

Африка арçыннисем чăнласах хĕрарăма юрама пĕлеççĕ. Тĕлпулăва вĕсем пирĕннисем пек спорт костюмĕпе мар, шурă костюмпа, кĕпепе, шампань эрехĕпе, пике амăшĕ валли чечек çыххипе пыраççĕ. Провинцире уйрăмах тыткăнлать çакă. Ростов облаçĕнче Африкăран килнĕ каччă валли хĕрсен парадне йĕркеленĕ: хăшĕ килĕшет – çавна суйла.

**– Кăсăклă, мĕнле пикесене суйлаççĕ вара вĕсем?**

– Яланхи пекех, чи малти вырăнта, паллах, юрату. Унтан – пике кăмăлĕ. Каярахпа вара – хĕрарăмăн çие юлни, арлă-арăмлă пурнăça саккунлă майпа йĕркелесси, вĕренӳ тата професси енчен тивĕçтерекен шайри мăшăр тупасси, вĕреннĕ вăхăтра Раççейре пурăнмалли лайăх кĕтеслĕ пуласси. Юлашки вăхăтра вара – пирĕн çĕршывра бизнес йĕркелесси тата çак тĕллевпе РФ гражданствине илесси.

Унсăр пуçне, хура арçынсемшĕн шăпах шурă хĕрарăм статуслă шутланать. Вĕсен рейтингĕнче малти вырăнта – Раççей, Украина, Беларуç пикисем. СССР тытăмĕнче пулнă çĕршывсенчи азиаткăсем унта сайра-хутра кăна лекеççĕ.

## Çичĕ тинĕс леш енче

**– Анчах та унта, çичĕ тинĕс леш енче, хăйсене мĕн кĕтнине пирĕн хĕрсем пĕлсех те каймаççĕ пулĕ-ха?**

– Вĕсенчен нумайăшĕ Африка ăçта вырнаçнине картта çинче те кăтартайман. Унта тĕн те урăх, упăшкин темиçе арăм та пулма пултарасси пирки вĕсем шухăшламан та. Ун пек упăшка арăмĕн çуралнă кунĕ çинчен те, тĕл пулма калаçса татăлни çинчен те асра пачах та тытмасса та пултарать. Унта йĕркеллĕ шутланать ку.

Африка арçыннишĕн юттипе çыхланни мăшăре улталанине пĕлтермест. Унта ку та йăлана кĕнĕ. Вырăс хĕрарăмĕсем çакна пĕлсен хăшĕ-пĕри уйрăлнă, тепри асăрхаманçи тунă.

Шел те, романтика нумай чухне йăла ыйтăвĕсене çапăнса арканать. Пĕр хĕрарăм хăй чутах чĕлхесĕр пулса ларманнине каласа кăтартнăччĕ – çӳллĕ курăк хушшинчен ăна хирĕç пĕр ушкăн çурма çарамас арçын сиксе тухнă... Упăшкин тăванĕсем çапла майпа ăна кĕтсе илсе савăнтарасшăн пулнă иккен.



Самолетран тухсанах вырăс хĕрĕшĕн йăлт улшăнать: чи малтан – климат, тĕлĕнмелле шăрăх унта. Унтан – упăшка. Вăл – килте, унта унăн сăмахĕ – саккун. Кение кайнă хĕрарăм каласа кăтартнинчен. Мускавра унăн мăшăрĕ арăмне те, ачисене те, ĕçне те юратнă. Тăван çĕршывне çитсен вара “маскине” хывнă.

## Çăва çинче те, виллăра та...

Тĕрлĕрен шăпа кĕтнĕ вырăс хĕрĕсене Африкăра: пĕрисем çĕр урайĕнче пурăнма пуçланă, теприсем – тарçăсем тытса тăракан виллăра. Анчах çын теме те хăнăхать.

**– Инкек те сиксе тухма пултарнă-тăр...**

– Хĕрарăмсем, киле таврăнас тĕллевпе, паспорчĕсене посольство картишне стена урлă ывăтни те пулнă. Африка хăш-пĕр çĕршывĕн саккунĕ тăрăх, унта çуралнă ачана Раççее илсе таврăнма питĕ йывăр. Тепĕр чухне пачах та ирĕк çук.

Ĕçтешĕм каласа кăтартни асра. Пĕррехинче Каирта Вилĕ хулара – çăва ку – вырăсла калаçнине илтнĕ вăл. Икĕ хĕрарăма упăшкисемпе вĕсен тăванĕсем килтен хăваласа кăларса янă иккен – хăйсене каччă кайнă çынсем пек тыткалама пĕлменшĕн. Лешсем, ачисемпе курнăçма май пултăр тесе, çăва çинче выçăллă-тутăллă пурăнма та хирĕçлемен.

> **Африка арçыннисем чăнласах хĕрарăма юрама пĕлеççĕ. Тĕлпулăва вĕсем пирĕннисем пек спорт костюмĕпе мар, шурă костюмпа, кĕпепе, шампань эрехĕпе, пике амăшĕ валли чечек çыххипе пыраççĕ. Провинцире уйрăмах тыткăнлать çакă. Ростов облаçĕнче Африкăран килнĕ каччă валли хĕрсен парадне йĕркеленĕ: хăшĕ килĕшет – çавна суйла.**

Хăш-пĕр хĕрарăм çинчен эпир нимĕн те пĕлместпĕр. Вĕсем ислам тĕнне йышăнса хиджаб тăхăннă, пирĕнпе хутшăнмаççĕ.

Унсăр пуçне Африкăра вĕçĕмсĕр тенĕ пек вăрçă пырать. Хĕрӳ вырăнсене çакланнă хĕрарăмсен шăпи пирки кам каласа пама пултарĕ?

Одесса пики Конго çар çыннипе пĕрлешнĕ. Каярахпа мăшăрне Мариан Нгуаби президент хуралне йышăннă. Анчах та çĕршыв ертӳçине вĕлернĕ. Хайхи хĕрарăмăн упăшкине те айăпланă – усал ĕçе пурнăçланă çĕре вăл та хутшăннă имĕш. Вĕлерме йышăннă. Юлашки самантра айăплава улăштарнă – ĕмĕрлĕх ссылкăна ăсатнă. Хĕрарăма вăл Совет Союзĕнче çурални кăна çăлса хăварнă.

Мускав хĕрарăмĕ Конгора пăлхав пуçлансан епле тухса тарнине каласа кăтартнăччĕ. Аэропортра самолет патне чупнă чухне вĕсене пеме пуçланă. Аслă ывăлĕ кĕçĕннине хăйĕн кĕлеткипе хупланă.

Дон çинчи Ростоври хĕрарăмăн хăйĕн историйĕ. Телейĕлĕччĕ вăл. Ача çуртĕнче тухтăрта ĕçлекенскер тăлăх метиса усрава илнĕ. Кайран çав пепкен ашшĕне шыраса тупнă. Иккĕшĕ пĕрлешсе арçыннăн тăван çĕршывне тухса кайрĕç. Анчах та каярахпа унта та вăрçă пуçланчĕ. Арçын хыпарсăр çухалчĕ. Хĕрарăм ачипе вăрманта пытанса пурăнатчĕ. Малярипе чирлесе вилчĕ вăл. Ачана çăлас тесе дипломати пĕтĕм майне хута яма тиврĕ вĕт. Раççее илсе таврăнтăмăрах.

**– Вырăс хĕрĕсене Африкăра яланах çăкăр-тăварпа кĕтсе илмеççĕ пулĕ-ха.**

– Паллах. Çĕршывăн çурçĕр пайĕнче ку тĕлĕшпе ансатрах: Мароккăра, Тунисра, кăшт кăткăсрах – Алжирта. Кенипе Сьерра-Леонере юратсах каймаççĕ. Пĕр хĕрарăм каласа кăтартнă тăрăх, ăна шурă ӳчĕшĕн мар, Совет Союзĕнчен пулнăшăн йышăнман иккен. Вырăнти юристăн политика идеологине вырнаçман вăл. Юрать-ха çамрăк хĕрарăмăн упăшки дипломат пулнă та ытларах чухне ют çĕршывсенче пурăннă çемье.

**– Метис ачасене мĕнле йышăнаççĕ тата унта?**

– Раççейринчен лайăхрах. Вĕсем Африкăна хăвăртрах хăнăхаççĕ. Хутăш çемьесенче ача нумаях мар, ытларах чухне – иккĕ е виççĕ. Вĕсем тăватă чĕлхе таран пĕлеççĕ. Амăшĕсем пепкисене вырăс культурипе çывăхлатаççĕ. Шăпăрлансем Пушкина, Лермонтова вулаççĕ. Ют çĕршывра та аталанать патриотизм.

Пуян хутăш çемьесенче ачасене вĕренме Европăна е Америкăна яраççĕ. Чухăнраххисем Совет Союзĕнчи аслă шкулсене суйланă.

**– Паян Мускавра Африкăран вĕренме килнĕ çамрăксем сахалрах пек...**

– Юлашки çулсенче палăрмаллах пĕчĕкленчĕ вĕсен йышĕ. Халĕ пирĕн диплома та хакласах каймаççĕ: пĕлӳ шайĕ чакрĕ, хакĕ ӳсрĕ. Малярах общество организацийĕсен квотипе килĕшӳллĕн килетчĕç. Халĕ ку енĕпе те ларутăру чаплах мар.

## Арçын сахалрах

**– Анчах мĕншĕн-ха эпир хĕрарăмсем çинчен кăна калаçатпăр? Хура ӳтлĕ пикесене суйлакан шурă ӳтлĕ арçынсем çук пек...**

– Вĕсем çапах та темĕн чухлĕ сахалрах. Çук, Африка пикисем вĕсене илĕртменнипе çыхăнман ку, унтан çапах та пирĕн çĕршыва каччăсем килнĕ ытларах. Унсăр пуçне ют çĕршыв хĕрĕпе çемье çавăрни карьерăна начар витĕм кӳнĕ. Континентĕпе те темиçе тесетке шурă арçынна шыраса тупма пулать тен? Хăрушсăрлăх органĕнче ĕçленĕ ветеранăн ывăлĕ хура ӳтлĕ хĕре кача илнĕччĕ. Чиперех пурăнаççĕ вĕсем.

**– Пирĕн хĕрарăмсем унта ĕç тупаççĕ-и?**

– 50-60-мĕш çулсенче тухса кайнисенчен пурте тенĕ пек аслă пĕлӳллĕччĕ. Вырăс арăм, сăмахран, тӳрех элитăна çакланнă – упăшки те аслă пĕлӳллĕ вĕт унăн. Пирĕн хĕрарăмсен дипломĕсене унта йышăнасшăнах мар, çапах та каярахпа ĕçе вырнаçатчĕç вĕсем. Конгора вĕсем, ют çĕршыв гражданкисем, мăшăрĕсенчен те ытларах ĕçлесе илеççĕ. Мароккăра вара чи хисеплĕ професси – фармацевт. Университетра та вĕрентеççĕ хĕрарăмсем. Библиотека уçаççĕ, ачасене сиплеççĕ, кĕнеке çыраççĕ. Мана пĕр Наташа çинчен каласа кăтартнăччĕ. Вăл кикую халăхĕн каччипе пĕрлешнĕ. Вырăнта тумтир çĕлес енĕпе ателье уçнă. Çав çĕршывăн президенчĕн арăмĕ те саккас пама пуçланă ăна! Ун хыççăн – чиновниксен мăшăрĕсем те.

Императорăн Хура тинĕс эскадрин карапĕсем 1920 çулта Тунис Бизерт портне пĕчĕк кăна Анастасия Манштейна илсе çитернĕ. Çак хĕрарăм ĕмĕр тăршшĕпех Тунисра пурăнса иртнĕ. Бизертăн пĕр лапамĕ – унта Александр Невский палăкĕ пур – унăн ячĕпе хисепленет. Рабатра вара паян та Прасковья Шереметева пурăнать, вăл Мароккăри вырăс эмигранчĕсем çинчен кĕнеке çырать.

/Pixabay.com материалĕпе тата сăнӳкерчĕкĕпе усă курнă/.

*2015 çул тĕлне Мускавра Африка çĕршывĕнчен тухнă каччăсем çакăн чухлĕн çемье çавăрнă: Нигери – 16, Камерун – 15, Тунис – 12, Марокко – 9, Алжир – 9, Гана – 8, Кот-дИвуар – 7, Конго – 6, ЮАР, Гвинея – 4-шар, Судан – 3, Уганда, Комор Утравĕсен Союзĕ, Кени, Гвинея-Бисау, Габон, Бенин – 2-шер, Эфиопи, Экваторти Гвинея, Чад, Танзани, Сенегал, Руанда, Зимбабве, Бурунди, Буркина-Фасо – 1-ер.*

